Пĕтĕм тĕнчĕри пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938
ДЕКАБĔР
23
ЕРНЕКУН
293(5106) №

Чăваш Коммунĕ

21-мĕш çул тухать. ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн хаçачĕ. Пĕр №-рĕ 10 пус.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом Печати.

ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, ред. заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн—4—40, парти пурнăç пайĕн—7—97, йалхуçалăх пайĕн — 4—97, советсен пайĕн—0—88, промышленнăç пайĕн—0—85, йалкорсен пайĕн—2—30, дежурнăйĕн — 6—23.

Пĕтĕм Сойузри халăх переписне хатĕрленес ĕçсене татса паракан тапхăр

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă тăрăх, 1939 çулта Пĕтĕм Сойузри халăх переписĕ пулса иртет. Перепис хуласенче 1939 çулти йанварĕн 17-мĕшĕнчен пуçласа 23-мĕшĕччен, йалсенче йанварĕн 17-мĕшĕнчен пуçласа 26-мĕшĕччен пырать.

Перепис пĕтĕм халăх интересĕшĕн пулса иртет, вăл пĕтĕм ĕçсыннисене Ленин—Сталин партийĕ йертсе пынипе коммунисăм обществи тăвас ĕçре çĕнĕ çĕнтерӳсем тума пулăшать. Вăл халиччен тунă пĕтĕм çитĕнӳсене хисепе илсе тухма тата промышленнăç, йалхуçалăхĕ, културă строителстви ĕçĕсен малалахи планĕсене тума май парать. Çавăнпа та ĕнтĕ халăх переписĕ государствăлă-политикăлă пысăк ĕç пулса тăрать.

Халăх переписĕ пуçланиччен 25 кун анчах йулчĕ. Çак кĕске вăхăт вăл перепиçе хатĕрленес ĕçсене пĕтĕмпех татса паракан тапхăр пулать. Вăхăт сахал йулчĕ пулин те перепиçе хатĕрленесси çителĕклĕ пырать теме çук-ха. Нумайах та пулмасть ПСК(б)П Чăваш Обкомĕн бӳровĕ республикăра Пĕтĕм Сойузри халăх переписне ирттерме хатĕрленес ĕçсем мĕнле пыни çинчен сӳтсе-йаврĕ, ĕçре чылай çитменлĕхсем пуррине палăртрĕ.

Перепиçре ĕçлекен кадрсене вĕрентсе хатĕрлесси тата вĕсене ĕçлеме çирĕплетесси çителĕксĕр пырать. Вăрнар районĕнче инструктăр-контролорсем 1 çын, счетчиксем 14, Канаш районĕнче инструктăр-контролорсем 6 çын, счетчиксем 15 çын тата Трак районĕнче инструктăр-контролорсем 6 çын çитмеççĕ.

Хăшнĕр районсенче ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ перепиç ирттерес тĕлĕшпе йышăннă постановленине пăсса ĕçленисем пулнă. Шăмăршă районĕнче перепиç кадрĕсене малтан тĕплĕн сăнаса тĕрĕслемесĕрех çирĕплетнĕ. Кадрсене суйласа илесси тата вĕсене ĕçлеме çирĕплетесси çине çиелтен пăхнине пула Пăрачкав, Ишлей, Шăхасан, Куславкка *тата Улатăр районĕсенче перепиç* кадрĕсем шутне политикă йенчен шанăçсăр тухнă çынсем хăйсене кĕнисем те пулнă. Халăх-Хуçалăх Учочĕн Чăваш республикĕнчи управленийĕ те кадрсем хатĕрлес йенĕпе çителĕклĕ ĕçлемен.

Перепиçре ĕçлеме уйăрнă çынсене хăйсен тĕп ĕçĕнчен хăтарса *перепиçе хатĕрленес ĕçе хутшăнтармала.* Апла пулин те Çĕмĕрле комбиначĕн директăрĕ Шаликăв *йулташ счетчиксем пулма уйăрнă* 3 çынна курса *вĕреиме йамасăр* тăрать. Çавăн пекех „Труженик" ертелре 2 çынна, „Болшевик" саватран пĕр çынна счетчиксен курсне вĕревме йаман. Перепиçре ĕçлеме уйăрнисене урăх ĕçе куçарнисем те пур. Вăрмар районĕнче Халăх-Хуçалăх учочĕн районри инспектăр помошникне курсра вĕрентсе каларьă хыççăн урăх ĕçе куçарнă.

Суйласа илнĕ тата курссенче вĕрентсе кăларнă çынсене нимĕнле майпа та ытти работниксемпе улăштарма йурамасть.

Перепиçе мĕншĕн ирттерни тата унăн задачисем çинчен халăха ăнлантарса парасси çителĕклĕ пымасть. ПСК(б)П райкомĕсемпе райĕçтăвкомсем нумайĕш массăлă-ăнлантарулă ĕçе пуçарса пымаççĕ. Пропагандиссене, агитатăрсене тата беседчиксене ĕçе хутшăнтарас тĕлĕшпе тивĕçлипе ĕçлеме тытăнман. *Перепиçе хатĕрленес* ĕçре пулăшакан комиççисем обществĕнлăçа активлăн ĕçе хутшăнтарма май параççĕ. Вĕсенче *предприйатисемпе* учрежденисенчи, колхозсенчи çĕршер, пиншер агитатăрсем, советсен депутачĕсем активлăн хутшăнса ĕçлеме пултараççĕ. Анчах пирĕн республикăра комиççисем организацилессипе вĕсен ĕçне йĕркелессине кирлĕ пек хакламан çук. Шупашкар хули, Патăрйел тата ытти районсенче перепиçре пулăшакан комиççисене организацилесси питех те çителĕксĕр пырать. ПСК(б)П райкомĕсем, райĕçтăвкомсем тата халăх - хуçалăх учочĕн органĕсем вĕсене кирлĕ пек йертсе пымаççĕ. Çак-а пула организациленĕ комиççисем те начар ĕçлеççĕ. Сăмахран, Шупашкар хуливче организациленĕ 22 комиççирен икĕ комиççи çеç ĕçлет.

Профсойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Совечĕн VII-мĕш пленумĕ профсойузсен перепиçе активлăн хутшăнса ĕçлемели çинчен йатарласа постановлени йышăннă. Ку постановлени тухнă хыççăн профсойузсен перепиçе хатĕрленес тĕлĕшпе хĕрӳлĕн ĕçлемеле пулнă. Халĕ кăна курма çук-ха. Профсойузсен обкомĕсем (государствă учрежденисенчи работниксен сойузĕн обкомĕсĕр пуçне) çак ĕçе пачах та хутшăнман. Вĕсем ку йенĕпе хапрăк-савăтсенчи комитетсене, местькомсене, профкомсене кирлĕ пек йертсе пымаççĕ. Çакă вăл профсойуз организацисем перепиç çав тери пысăк вырăнта тăнине хакламаннине пĕлтерет. Профсойуз организацисен Профсойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Совечĕн VII-мĕш пленумĕ йышăннă постановленине болшевикла пурнăçа кĕртме тытăнмала, перепиçе хатĕрленес ĕçе халех активлăн хутшăнмала.

Парти райкомĕсен ĕçре пулăрнă çитменлĕхсене пĕтерес тата перепиçе пур йенĕпе те лайăх хатĕрленсе çитес тĕлĕшпе халех конкретлă ĕçсем туса ирттермеле. Райовсенчи коммунистсен пухăвĕсенче перепиçе тивĕçлипе хатĕрленес ыйтусене сӳтсе-йавмала. Массăлă-ăнлантарулă ĕçсене тĕпрен лайăхлатмала. Парти организацисен *пĕтĕм агитатăрсене, пропагандиссене,* беседчиксене ирпĕ суйлав кампанийĕнче ĕçленĕ опытсемпе уçă курма пулăшмала. Пур парти райкомĕсемпе райĕçтăвкомсен çак кунсенчех массăлă перепиç кадрĕсене суйласа илсе вĕсене çирĕплетсе çитермеле, перепиç уйрăмĕсем валли лайăх çуртсем уйăрса памала, работниксене вырăнсене тухса çӳреме транспăрт памала.

Троцкисла-бухаринла, буржуаллă-националисла фашисла бандăн агенчĕсем 1937 çулти халăх переписне ирттернĕ чухне пысăк сийен кӳчĕç. Правителствă перепиç ирттерес тĕлĕшпе панă кăтартусене вĕсем пур майсемпе те пăсса пынă. Вĕсем совет халăхĕ кĕрешсе илнĕ çитĕнӳсене пытарса хăварма пăхнă, халăх хисепне пăтраштарса шута илнĕ. Халăх тăшманĕсем çитес перепиçре те ăна пăтраштарма, ăна йăвăрлăхсем кӳме тăрăшĕç. Хăшпĕр вырăнсенче попсемпе çектантсем перепиçе хатĕрленес ĕçе хирĕç кĕрешме ăмсанни халех сисĕнет. Ку ĕнтĕ перепиçе хатĕрленнĕ вăхăтра та перепиç ирттернĕ чухне те *клас сисемлĕхне çӳлте* тытмалине тата клас тăшманĕсене вăхăтра палăртса çийĕнчех çапса салатма кирлине пĕлтерет.

Пĕтĕм Сойузри халăх переписĕ социалисăм çĕнтерĕвĕсене пĕтĕм тĕнче умĕнче *тепĕр хут кăтартса парĕ. Епĕр кун хыççăн тăван çĕр*шыври чи хаклă капитал çинчен—çынсем çинчен татах та лайăхрах пĕлме пултарăпăр. Перепиçе болшевикла хатĕрленсе кĕтсе илер, болшевикла организацилĕхпе ирттерер!

Пĕтĕм Сойузри халăх переписне хатĕрленни

Белоруççире Пĕтĕм Сойузри халăх переписне ирттерес ĕçе 17.600 çын хутшăнать. Вĕсем пурте кĕске *сруклă курссенче вĕренеççĕ. Перепиç* ирттерес ĕçри йертсе пыракан работниксем 5000 çын курссенчен вĕренсе тухнă та ĕнтĕ.

Республикăра хуласемпе йалсенче перепиçе ирттерес ĕçре пулăшакан 7.380 комиççи тунă. Вăл комиççисенче рабочисем, интеллигентсем, килкуçи хĕрарăмĕсем пурĕ 33.634 пин çын хутшăнса ĕçлеççĕ.

Горький облаçĕнче Пĕтĕм Сойузри халăх *переписне хатĕрленнĕ май массăлă-ăнлантарулă* ĕçе анлăн сарса пыраççĕ. Перепиçе мĕншĕн ирттерни çинчен пурĕ 10.600 калаçу туса ирттернĕ. Вăл калаçусене çур мĕлйун çын хутшăннă. Чылай районсенче перепиç ыйтăвĕпе парти тата совет активĕсен пухăвĕсене ирттернĕ.

(ТАСС).

Партин Шупашкар хулинчи организаци активĕн пухăвĕ

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕн II-мĕш пленумĕн итогĕсене сӳтсе-йавас ыйтупа, декабĕрĕн 21-мĕшĕнче партин Шупашкар хулинчи организаци активĕн пухăвĕ пулса иртрĕ. Ĕçлĕ президиума суйланă хыççăн, ПСК(б)П Обкомĕн тата хула комитечĕн çекретарĕ Волкăв йулташ пухун хисеплĕ президиумне суйлама сĕнчĕ. Пуху Волкăв йулташ сĕнӳне тăвăллăн алă çупса йышăнчĕ. Актив пухăвĕ партия тата пĕтĕм ĕççыннисен çулпуçне, учителне тата тусне Сталин йулташа, Молăтăва, Калинин, Ворошилăв, Каганович, Жданăв, Андрейĕв, Микойан, Йежов Хрущчов, Димитров, Телман, Хосе Диас йулташсене тăвăллăн алă çупса хисеплĕ президиума суйларĕ.

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕн II-мĕш пленумĕн итогĕсем çинчен хула комитечĕн çекретарĕ Лапин йулташ доклад туса пачĕ. Лапин йулташ доклад тунă вăхăтра пухăва Совет Сойузĕн Геройĕ аслă лейтенант Винокурăв йулташ пырса кĕрет. Парти активĕн пухăвĕ социалисăмлă тăван çĕршыв патриотне хĕрӳллĕн саламласа Винокурăв йулташа пуху президиумне суйларĕ.

Лапин йулташ доклачĕ тăрăх прение тухса калаçнă йулташсем парти Обкомĕн II-мĕш пленумĕн решенийĕсене пурте ырласа йышăнчĕç.

ПСК(б)П Обком çекретарĕ Волкăв йулташ пысăк сăмах тухса каларĕ. Вăл хăйĕн сăмахĕнче ПСÇЛКС Тĕпкомĕн VII-мĕш пленумĕн ĕçĕсем çинчен, ПСÇЛКС Тĕпкомĕн инструктăрĕ *пулнă* Мишаковă йул*таш ПСК(б)П Чăваш Обкомĕнче,* ПСÇЛКС Обкомĕнче тата ытти организацисенче ларнă халăх тăшманĕсене хирĕç болшевикла кĕрешни çинчен тĕплĕн каласа пачĕ. Халăхăн усал тăшманĕсем, буржуаллă националиссем—ПСК(б)П Обкомĕн çекретарĕсем пулнăскерсем Петров, Андрейĕв, Иванов, ПСÇЛКС Обкомĕн çекретарĕсем пулнă Сымокина Терентйĕв тата çак тăшманла йăва лартнă ПСÇЛКС Обком çекретарĕ пулнă Никифăрăвпа ыттисене палăртса *тăрă шыв çине кăларса, вĕсене* тивĕçлипе айăпланă.

Анчах та тăшмансен ĕçне малаллă туса пыракансем пур-ха. Тăшмансен йулашкисене хирĕç хайăрран кĕрешме, вăрттăн пытанса ĕçлекен тăшмансене: троцкисла-бухаринла тата буржуаллă-националисла бандăсен йулашкисене палăртса тĕпĕ-йĕрĕпех пĕтерес тĕлĕшпе татăклăн кĕрешсе пыма чĕнчĕ Волкăв йулташ.

Волкăв йулташ ПСК(б)П Обкомĕн II-мĕш пленумĕн решенисене саботаж тунă фактсем çинчен каласа пачĕ. ПСК(б)П Канаш райкомĕн çекретарĕ пулнă Белоруссăв тата райĕçтăвком председателĕ пулнă Бугров районри пропыва пĕтерессишĕн татăклăн кĕрешес, Обком пленумĕн решенисене пурнăçа кĕртме коммунистсене тата пĕтĕм ĕççыннисене мобилизацилес вырăнне, Обком пленумĕ, Обком бӳровĕ вĕсен доклачĕсем тăрăх йышăннă решенийе парторганизацинчен пытарнă, районри чăнчăн ĕç çинчен каласа паман. Белоруссăвпа Бугров тунă ĕç—партине хирĕçле ĕç. Çакнашкал ĕçе тăшмансемпе пĕрле пыракан çынсем çеç тума пултарнă.

Малала Волкăв йулташ „Красная Чувашия" хаçат редакцийĕн „парти пурнăçĕн пайĕн" пуçлăхĕ пулнă А. Саррăн тӳсме çук киревсĕр ĕçĕсем çинчен каласа пачĕ. Саррă халăх тăшманĕсен Петровпа Ивановăн тата ыттисен ĕçĕсене туса пынă, вĕсем майлă пулнă. Халĕ вăл хăйне-хăй нимĕн айăпсăр çын пек кăтартма хăтланать. Анчах та фактсем Саррă айăпне уççăнах çирĕплетсе параççĕ, вĕсем Саррăн чăн-чăн сăн-сăпатне уççăн кăтартса пачĕç. Çавăнпа та парти Обкомĕ çумĕнчи пуçламĕш парторганизаци Саррăна партирен кăларнă.

Парти активĕн пухăвĕ ПСК(б)П *Облаç комитечĕн II-мĕш пленумĕн* решенийĕсене ырласа постановлени йышăнчĕ. Актив пухăвĕ ПСК(б)П хула комитет бӳроне халăхăн усал тăшманне Кузнецова тата унăн троцкисла, буржуаллă-националисла йĕкĕрне хӳтлекен, парти вĕрентĕвĕн тĕп çурчĕн директăрĕ пулса ĕçленĕ Раскин йулташăн партилĕхĕ çинчен сӳтсе-йавма хушса хăварчĕ.

* * *

Пуху пĕтес умĕн Совет Сойузĕн Геройĕ Винокурăв йулташ пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çар Хасан кӳлли районĕнче Йапони самурайĕсене мĕнле çапса аркатни çинчен каласа пачĕ.

Испанири фронтсенче

(ТАСС Парижран пĕлтернисем тăрăх)

Центрти фронтра

Еспань агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Центрти фронтри Естремадурă участкинче, декабĕрĕн 20-мĕшĕнче пăлхавçăсем Кабеса дель Буей сектăрĕнчи 624 высота патĕнче республиканĕцсен позицийĕсем çине тапăнма хăтланса пăхнă. Анчах ăна республиканĕцсем çĕмĕрсе тăкнă.

Мадрид районĕнче кунсеренех пысăк мар çапăçусем пулса пыраççĕ. Пăлхавçăсен артиллерийĕ Мадрид çине, уйгăмăнах халăх нумай *пурăнакан кварталсем çине,* персе тăрать.

Декабĕрĕн 20-мĕшĕнче ытти фронтсенче нимĕнле пăлăрах çапăçусем те пулман.

Гавас агентстви пĕлтернĕ тăрăх, декабĕрĕн 20-мĕшĕнче фашиссен авиацийĕ Таррагонăпа Реус порчĕсем çине бомбăсем пăрахнă. *Таррагонă çине бомбăсем пăрахма ирхине вунă сехетре пуçланă.* Порт тĕлне фашиссен 30 самолочĕ вĕçсе пынă. Сигналсем парса систернипе, хула халăхĕ убежишчăсене тарса пытаннă.

Фашиссен самолочĕсем 100-шер килограм тайакан бомбăсем 50 пăрахнă тата 250-шар килограмла темиçе бомба пăрахнă. Бомбăсем тивнипе 15 çурт ишĕрĕлнĕ.

Таррагонă хыççăн фашиссен самолочĕсем Реус, Пинедă çине тата провинцири ытти вырăнсем çине пырса бомбăсем пăрахнă. Реусра икĕ çын вилнĕ тата виçĕ çын аманнă.

Кăнтăрла иртсен фашиссен *самолочĕсем Таррагона çине тăватă* хутчен вĕçсе пырса бомбăсем пăрахма хăтланса пăхнă, анчах республикă самолочĕсем вĕсене кашнинчех кайала хăваласа йанă.

Франко генерала хирĕç загăвăр

Испанири пăлхавçăсен штабĕ вырнаçса тăракан Бургос хулинче Франко генерала хирĕç тунă пысăк загăвăра тупса палăртнă. Декабĕрĕн 3-мĕшĕнче *кăнтăрла пĕтĕм* хулана полицейскисем çавăрса илнĕ пулнă, каçхине—гостиницăсемпе *ресторансенче ухтару туса тухнă.* Çĕрле тата ун хыççăнхи кунсенче 765 çынна арестленĕ. Арĕстленисем хушшинче пуринчен ытла офицерсем тата салтаксем. Арĕстленисенчен нумайĕшне персе *вĕлернĕ.*

Загăвăршчиксем Франко правителствине сирпĕтсе антарма шухăшланă.

Сан-Себастйанра, Франко *генералăн наступлени тумалли планне* вăрланă май, 200 çынна арестленĕ. Çав наступленире республиканĕцсене хирĕç çур мĕлйун салтак кăларнала пулнă. Пăлхавçăсен артиллерийĕпе авиацийĕ аçта тата мĕнле вырнаçса тăнине çав план çинче тĕплĕн кăтартса хунă пулнă.

(ТАСС).

Испанири фашиссен тискерлĕхĕ

Еспань агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Леон хулинчи (Испани) тĕрмере фашиссем пурĕ 4000 пин ачана хупса усраççĕ, вĕсене каллама çук хайаррăн тыткалаççĕ. Ачасем пурте республиканĕцсен çемйисенчен.

Ачасен „преступленийĕ" çакăнта: вĕсем хăйсен ашшĕ-амăшĕсем çинчен нимĕн те каласа пĕлтерменçĕ.

(ТАСС).

Совет Сойузĕн Геройĕ аслă лейтенант Вйачеслав Петрович Винокурăв йулташ.

Совет Сойузĕн Геройĕ Винокурăв—автомобилсем йусакан савăтри рабочисем патĕнче

Совет Сойузĕн Геройĕ аслă лейтенант В. П. Винокурăв йулташ ĕнер кăнтăрла Шупашкарти автомобилсем йусакан савăтри рабочисем патĕнче пулчĕ; Хĕрлĕ Çара каиччен вăл çак савăтра ĕçленĕ.

Савăт хапхинчен кĕнĕ çĕре геройăн хĕрлĕ хăмачпа илемлетнĕ *портретне тухса çакнă.*

Винокурăв йулташа савăтри рабочисем пысăк кăвислăхпа ăшшăн кĕтсе илчĕç. Чи малтанах ун патне ĕлĕк унăн инструктăрĕ пулнă А. Н. Сапожниковăв й. пырать. Винокурăв йулташ хăйĕн учителне часах палласа илет те ыталаса чуптăвать. Савăтра нумайранпа ĕçлекен ватă работисем Совет Сойузĕн Геройне хăйсен савăтĕнчи ĕçсем çинчен, программăна мĕнле тултарса пыни çинчен каласа пачĕç.

Унтан Винокурăв йулташ савăтри цехсене пăхса çӳрерĕ, уйрăмах хăй ĕлĕк ĕçленĕ слесарнăй станок патĕнче чарăнса тăчĕ.

Винокурăв йулташ автомобил*сем йусакан савăтра пĕтĕмпе сехет çурăна йахăн пулчĕ.* Каçхине Хресчен çуртĕнче автомобилсем йусакан савăтри пĕтĕм рабочисемпе пулнă тĕлпулу *вечерĕнче* вăл Хасан кӳлли районĕнче Йапони самурайĕсене çĕмĕрсе тăкни çинчен тĕплĕн каласа пачĕ.

КИТАЙРИ ВĂРÇĂ

(Чунцинран тата Шанхайран ТАСС корреспонденчĕсем пĕлтернĕ тăрăх)

Центр Китайра

Хунань провинцин çурçĕр пайĕнче лапкă тăрать. Иочжоуран 10 километр хĕвелтухăçнерех Китай партизанĕсем тапăннипе пулă йапонĕцсем пысăк çухатусем тӳснĕ.

Йанцзы йуханшывĕ хухса пыни йапонĕцсен карапĕсене малала кайма чăрмантарать. Йапони судиисем уйрăмах Дунтин кӳллинчен çурçĕрелле вумайăн пухăнса йăни паларать.

Кăнтăр Китайра

Çапăçусем Кантон районĕнче пулса пыраççĕ. Китай çарĕсен уйрăм отрйачесем *партизансемпе* пĕрле Кантон çывăхне çитнĕ, вĕсем хуларан çурçĕр-хĕвелтухăçнерех тăраççĕ Кантонра йапонĕцсем *хăрçă вăхăтĕнчи йĕрке туса* хунă.

Гуандун провинцин кăнтăр-хĕ*веланăç çыранĕсем патĕнче йапонĕцсен çар судисем çӳренине* курнă. Йапони суднисем В айжоу утравĕн çурçĕр-хĕвеланăç çыранĕсем патĕнче тата Байло хули çывăхĕнче пухăнса тăраççĕ.

Çурçĕр Китайра

Шаньси провинцин кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнче, декаберĕн 14-мĕшĕнче, йапонĕцсен 200 çынтан тăракан отрйачĕ çимăл орудисемпе хĕçпăшаллавнăскер. Хецзиврен тухса хĕвелтухăçĕнелле кайнă. Тепĕр куне Китай çарĕсем Синьцзйан районĕнче (Хецзиньрен кăнтăр-хĕвелтухăçнерех) йапонĕцсемпе çапăçма тытăннă. Тавата сехет хушши çапăçнă хыççăн йапонĕцсем Хецзинь патнелле чакнă.

Шаньдун провинцинче йапонĕцсем Китай партизанĕсен отрйачĕсене хирĕç експедицисем йама пуçланă. Декаберен 19-мĕшĕнче йапонĕцсен Тайанри тата Лайури гарнизонĕсем (Цзинань хулинчен кăнтăрпа кăнтăр-хĕвелтухăçнерех) пурĕ 1.500 çын, Йанлюдйан тата Синтай çинелле наступлени тума тытăннă. Вăл наступленине авиаци те хутшăннă. Çав вăхăтрах йапонĕцсен 1000 çынтан тăракан тепĕр отрйачĕ Цзыниньрен кăнтăр йенчерех кайса Бошань çине (Цзинаньрен хĕвеланăçнерех) тапанса пыма хăтланса пăхнă. Вăл районра пысăк çапăçусем пулса иртеççĕ.

* * *

Çак кунсенче йапонĕцсен çичĕ самолочĕ Дуншен çине (Суййуань провинци, Баотоуран 65 километр кăнтăр-хĕвеланăçнерех) бомбăсем пăрахнă. Вилнисем тата аманнисем 300 çын шутланаççĕ. Провинцин хĕвеланăç пайĕнче, декабĕрĕн 18-мĕшĕнче, йапонĕцсен самолочĕ Линьхе хули çине темиçе бомба пăрахнă.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

ПСК(б)П историне епĕ мĕнле вĕренетĕп

„ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсĕ“ тухнă май парти пропагандине йĕркелесси çинчен“ ПСК(б)П Тĕпкомĕ йышăннă постановленине пĕтĕм совет интеллигенцийĕ, партири тата партире мар боđшевиксем питĕ пысăк хаваслăхпа кĕтсе илчĕç. Çав историлĕ постановленийĕ коммуниссем, комсомолĕцсем, совет интеллигенцийĕ харпăрхăй тĕллĕн темиçе хут вуласа тухнисĕр пуçне, пухусенче сÿтсе-явса вĕренчĕç. Парти Тĕпкомĕн постановленийĕ хамăрăн кадрсене марксисăм-ленинисăмпа хĕçпăшаллантарса, вĕсем теори тĕлĕшĕнчен йулса пынине пĕтермели татăклă майсене кăтартса парат.

„ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсне“ „Правда“ хаçатра пичетлеме пуçласан, Нурăсри туллимар вăтам шкулти учителсем, çав шутрах епĕ те парти историне тĕплĕн, тарăн вĕренме хатĕрленме тытăнтăмăр.

„ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсĕ“ уйрăм кĕнекепе пичетленсе тухсан, ăна учителсем нумайăшĕ туйанчĕç. Халĕ ĕнтĕ епĕр, совет шкулĕнчи учителсем, çак чаплă, Сталин йулташ хăй тÿррĕмĕн хутшăнса çырнă учебник тăрăх ПСК(б)П историне тĕплĕн, тарăн вĕренме тытăнтăмăр.

Парти историне тĕплĕн вĕренче тытăннă май хамăн ĕçсем тата хамăн шухăшсем çинчен каласа парас килет.

Кружоксенче вĕреннĕ чухне хăш вăхăтра пырсан та, ытти йулташсене кĕтсе вăхăт усăсăр нумай иртетчĕ. Нумай чухне кружоксенче занđатисем те пулмасчĕç.

Хале ĕнтĕ епĕ парти историйĕн учебникне туйантăм та, парти Тĕпкомĕ хăйĕн постановленийĕнче кăтартса панă виççĕмĕш сыпăкри кружок программи тăрăх вĕренме тытăнтăм.

Парти историне епĕ мĕнле вĕренетĕп-а? Акă мĕнле: „ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсĕн“ пĕрремĕш сыпăкне вуларăм. Унсăр пуçне В. И. Ленин çырнă „О стачках“, „Задачи русских социал-демократов“, „О народничестве“, „Что такое „друзья народа“ и как они воюют против социал-демократов?“ йатлă произведенисене вуласа тухса, кашни произведени тăрăх уйрăм конспект çыртăм. Ленин çырнисене пурне те тĕплĕн йăланас шутпа епĕ Сталин йулташăн „Исторические корни ленинизма“, „Главное в ленинизме“ йатлă произведенисене вуласа тухрăм.

Ку çеç те мар. Епĕ парти историне вĕреннĕ чухне «Правда» хаçатра пичетленсе тухакан консуđтацилĕ статйасемпе тăтăшах усă куратăп. ССР Сойузĕн историйĕ çинчен çырнă кĕнекене вулатăп. Çакăн пекех тата çĕршывăн тĕрлĕ тапхăрти економикăлă пурнăçĕпе паллашатăп. Мĕншĕн тесен, унсăрăн парти историне тĕплĕн те тарăнăн вĕренме май çук. Халĕ епĕ В. И. Ленинăн „Развитие капитализма в России“ кĕнекине вулама тытăнтăм.

Парти историне вĕреннĕ чухне тимлĕх пурри тата хăвăн вăйна мобилизацилени кăна çителĕксĕр. Кунта харпăрхăй тĕллĕн вĕренекенсене куллен пулăшса пыни питĕ кирлĕ. Çапла, опыт çакна кăтартса пачĕ: малтанхи вăхăтра епĕ учебникĕн малтан каланинче „ВКП(б) выросла на основе рабочего движения в дореволюционной России из марксистских кружков и групп, которые связались с рабочим движением и внесли в него социалистическое сознание“ тенĕ вырăна тĕплĕн, тарăнăн ăнланаймарăм. Ку ыйту пирки районти парткабинета консуđтаци илме кайма тиврĕ. Кунсăр пуçне „Правда“ хаçатра пичетленнĕ „Социалистическая идеология и рабочее движение“ статйана, В. И Ленинăн „Что делать?“ произведенинчи „Стихийность масс и сознательность социал-демократии“ пайне вуласа тухма тиврĕ.

Çапла ĕнтĕ ПСК(б)П историне харпăрхăй тĕллĕн вĕренекенсене квалификацилĕ консуđтаци, пулăшу парас ыйту питĕ çивĕччĕн тухса тăрат. Çакна Нурăсри пуđницăри интеллигенци тĕл пулнă йăвăрлăхсенчен курма пулат. Фелđшĕр, вăлах профсойузсен вырăнти комитечĕн председателĕ. Петров йулташ парти историне вĕренессишĕн питĕ тăрăшат. Епĕ Петров йулташа мĕнле пулăшу кирли çинчен каласрăм. Петров йулташ, ун пекех пуđницăра ĕçлекен ытти йулташсем те литературă çуккипе, консуđтаци ăçтан илмелли пĕлменнипе аптраççĕ. Çакăнтан ĕнтĕ парти райкомĕн медицинă работникĕсене парти историне вĕренме ĕçпе пулăшас задач питĕ çивĕччĕн тухса тăрат.

Епĕ парти историне харпăрхăй тĕллĕн вĕренме тытăнни çакна та лайăх кăтартса пачĕ: çине тăрсан, вăйа мобилизацилесен марксисăм-ленинисăм теорине тарăннăн вĕренме кашни коммунис, комсомолĕц, совет интеллигенчĕ вăй çитерме пултарат.

И. С. Спиридонăв.

Вăрнар районĕнчи Нурăсри туллимар вăтам шкулри учителĕ.

Комсомолĕцсем „ПСК(б)П историн Кĕске курсне“ вĕренеççĕ

ТĂВАЙ. „ПСК(б) Парти историйĕн Кĕске курсне“ кăларнă май парти пропагандине йĕркелесси çинчен“ ПСК(б)П Тĕпкомĕ йышăннă постановленине Тĕмерти вăтам шкулти учителсем тата шкулта вĕренекен комсомолĕцсем пысăк çĕкленÿпе кĕтсе илчĕç. Вăл постановленине комсомолĕцсен пухăвĕнче, унтан учителсен канашлăвĕнче сÿтсе-йаврĕç.

„ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсне“ тĕплĕн вуласа вĕренме пулчĕç. Пухурах парти историне вĕренекенсене пулăшма консуđтацисем, лекцисем организацилеме йышăнчĕç.

Хађ комсомолĕцсем парти историне тарăнăн вĕренсе пыраççĕ. Уйрăмăнах кунта В. Пуршĕвă, В. Борисăв, С. Лисăв комсомолĕцсем тăрăшсах вĕренеççĕ. Вĕсем пĕрремĕш сыпăка вĕренсе пĕтернĕ. Вĕренекенсем кашни конспектсем çырса пыраççĕ. Вĕреннĕ чухне тĕл пулакан ăнланман ыйтусене консуđтантран ыйтса пĕлеççĕ.

Çавăн пекех Тушкилтри комсомолĕцсем те харпăрхăй тĕллĕн вĕренессине аван йĕркеленĕ. Н. Петровпа З. Семенăв комсомолĕцсем „ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсĕн“ пĕрремĕш сыпăкне вĕренсе пĕтереççĕ. Ытти комсомолĕцсем те тăрăшсах вĕренеççĕ.

Комсомолĕцсене парти историне вĕренме ПСÇЛКС райкомĕн пулăшса пымала. Анчах ку тĕлĕшпе ПСÇЛКС райкомĕ çителĕксĕр ĕçлет. Пропагандиссем чылай организацисенче ĕçлемеççĕ.

А. Пикишкин.

Парторгсене пулăшассине вăйлатмала

ПСК(б)П Йĕпреç райкомĕ парторгсемпе ĕçлессине кирлĕ пек хакламаст. Отчотпа суйлав вăхăтĕнче парторг пулса ĕçлеме çĕнĕ кадрсене чылай суйланă. Вĕсене канашлусене пуçтарса партилĕ-политикăлă тата организацилĕ ĕçсене йĕркелесе пыма вĕрентмеле. Анчах Йĕпреçре ку ĕç пачах урăхла тăрат. Отчотпа суйлав пухăвĕсем иртнĕренне, ултă уйăх хушшинче, парторгсемпе пурĕ те виçĕ канашлу çеç туса иртернĕ. Райком инструкторĕсем те парторгсене куллен конкретлă пулăшу парса пыраймаççĕ.

Йĕпреç районĕнче 15 пуçламĕш парторганизаци. Отчотпа суйлав пухăвĕсенче парторгсен ĕçĕсене 4 пуçламĕш парторганизацисенче çителĕксĕр, пĕр пуçламĕш парторганизацинче начар, тесе йышăннă. Ун хыççăн нумай вăхăт иртрĕ. ПСК(б)П райкомĕ çав парторганизацисене пухусенче йышăннă решенисене тата пренире коммуниссем панă сĕнÿсене пурнăçлама куллен пулăшса пыман.

ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ августăн 22-мĕшĕнче йышăннă постановленире çавнашкал пуçламĕш парторганизацисенчи парторгсен отчочĕсене ПСК(б)П райкомĕсен ларăвĕсенче итлесе конкретлă пулăшу пама хушнăччĕ. Унтанпа тăватă уйăх çитет ĕнтĕ. Ку постановленине ПСК(б)П райкомĕ халĕ те пурнăçламан-ха.

Райком хăйĕн икĕ ларăвĕсенче виçĕ парторг отчочĕсене итленĕ. Вĕсенчен иккĕшĕн ĕçĕсене татах çителĕксĕр тесе йышăннă (Хатĕрлев халăх комиссариачĕн районри уполномоченнăйĕ тата „Кооплеспром“ ертелĕ çумĕнчи пуçламĕш парторганизацисем).

ПСК(б)П райкомĕн парторгсемпе ĕçлессине тĕпренех улăштармала. Парторгсене час-часах канашлусене чĕнсе, вырăна кайса партилĕ-политикăлă ĕç опычĕпе паллаштармала тата ĕç планĕ тума пулăшмала.

Г. Сахалкин.

Член укçине вăхăтра тÿлемеле

Парти член укçине вăхăтра тÿлесси кашни коммунисăн тĕп облăзанносĕсенчен пĕри пулса тăрат. Çакна коммуниссен тата парторгсен нихăçан та манмала мар.

Йĕпреç районĕнче „Красный фронтовик“ колхоз çумĕнчи пуçламĕш парторганизаци парторгĕ Прокопйĕв йулташ, районри финанс пайĕ çумĕнчи парторг С. Илйин йулташ, райçутĕç пайĕ çумĕнчи парторг Й. Илйин йулташ парти член укçине кашни коммунисранах вăхăтра пуçтарса, перекет кассине хурса пыраççĕ.

Анчах, çакна пур парторгсем те çителĕклĕ ăнланса илеймен-ха. Сланец рудникĕнчи парторг Фадейĕв тата Буинскăри хăма çуракан савăтри парторг Дмитрийĕв йулташсем Октабĕр уйăвĕ хыççăн парти член укçине пуçтарман. ПСК(б) Парти райкомне кирлĕ отчотсене те тăратман.

Хăшпĕр коммуниссем парти член укçине пĕртте вăхăтра тÿлемеççĕ. И. Романов йулташ апрел уйăхĕ иртнĕренне член укçи тÿлемен. Парти кандидачĕ У. Зайцĕвă йулташ 9 уйăх тÿлемесĕр пурăннă. „Кооплеспром“ ертелĕн предçедателĕ Кудйаков йулташ кашни хутрах ик-виç уйăхшăн харăс тÿлесе пырат.

ПСК(б)П уставĕнче парти член укçине виçĕ уйăх хушши тÿлемен çын партирен механичĕски тухса ÿкет тесе çырнă. Парторгсен тата кашни коммунисăн ПСК(б)П уставне пурнăçласа пымала.

Рйабчиков.

1000 çын ытла вĕренет

Канашри вакунсем йусакан савăтри рабочисем Сталинла Конституцире çырса хунă правасемпе туллин усă кураççĕ.

Хађхи вăхăтра кунта темиçе тĕрлĕ шкулсем, курссем ĕçлеççĕ. Акă пĕр вăтам шкулта кăна 760 ача вĕренет. Кунсăр пуçне тата производствăран уйăрăлмасăр касхи вăтам шкулта 76 рабочи, мастăрсен шкулĕнче—46, тĕрлĕрен курссенче 170, хутла пĕлменнисен шкулĕнче 91 çын вĕренеççĕ.

Г. Никифăрăв.

Вырăс чĕлхине вĕрентес ĕç

Вырăс чĕлхи пирĕн халăхăн пурнăçĕнче пысăк вырăн йышăнса тăрат. Анчах çапах та çак пуйан та паха чĕлхене вĕрентес ĕçе шкулсенче кирлĕ пек йĕркелемен. Чăн та, ку ĕçре йулăшки çулсенче кăшт малала кайни сисĕнет, çав вăхăтрах пĕтĕмĕшпе илсен, вырăс чĕлхине вĕрентес ĕçĕн пахалăхĕ никама та çырлахтараймаст.

Акă, тĕслĕхрен, Трак районĕн центрĕнчи вăтам шкулта вырăс чĕлхипе кашни 100 ачаран 24 ача вĕренÿре ĕлкĕрсе пыраймаст. Уйрăм классем тăрăх илсе пăхсан, 6-мĕш „А“ класра вырăс чĕлхине кашни 100 ачаран 60 ача çеç ĕлкĕрсе пыни курăнат.

Трак вăтам шкулĕнче вырăс чĕлхине виçĕ учитель: Г. И. Иванов, В. З. Захарăв тата В. О. Йеремейĕвă йулташсем вĕрентеççĕ.

Г. И. Иванов учитель вырăсла калаçнă чух хăшпĕр сăмахсене тĕрĕс мар калат. Сăмахран, вăл „я выпел стакан чаю“ тесе вулат. Çавнашкалах В. О. Йеремейĕвă йулташăн та йăнăшсем пулкалаççĕ: „Каково жизнь Захара“, „Обломов сам переезжает своей слугой“ тата ыт. те.

В. З. Захарăв учитель ачасен вырăс чĕлхипе çырмали ĕç тетрачĕсене нихăçан та тĕрĕслемест.

Вырăс чĕлхи преподавателĕсем çырулăх ĕçĕсем сахал туса иртереççĕ. Сăмахран, вĕренÿ çулĕн 1-мĕш чĕрĕкĕнче, 8-мĕш класра грамматикă упражненийĕсем 4 хутчен, асăрхатару диктанчĕсем 3 хутчен, контролĕ диктантсем 2 хутчен, сочиненисем 3 хутчен иртернĕ.

Вырăс чĕлхине вĕрентес ĕçе 9-мĕшпе 10-ш классенче уйрăмах начар йĕркеленĕ.

Шкулсенче вырăс чĕлхине вĕрентес ĕçе лайăхлатасси педагогикă кадрĕсен пĕлÿлĕхĕнчен, вĕсем ку ĕçе тĕрĕс йĕркелеме пултарнинчен килет. Кунсăр пуçне, кунта учебниксемпе нагđаднăй пособисем те пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ.

Лайăх, тĕплĕн хатĕрленнĕ, методикă йенчен çирĕп хĕçпăшаллаланнă, пысăк та паха пĕлÿлĕ учитель çеç вырăс чĕлхине ăнăçлăн, тарăн вĕрентсе пыма пултарат. Учитель хăй предметне йуратса вĕрентни пĕтĕм ĕçе хавхалантарса пырат.

Уйрăмах пысăк тимлĕх кирлĕ ачасен вырăс чĕлхипе çырмали тетрачĕсене пăхса, сапаса, тĕрĕслесе пыма. Лайăх тетрат вырăс чĕлхине ăнăçлăн вĕрентес ĕçре паллă вырăн йышăнса тăрат. Типтерлĕ те таса тетрат йăнăшсене сахаллатма пулăшат.

Кашни вĕренекенĕн типтерлĕ те таса тетрат пултăр тесен, тетрачсене куллен йĕркеллĕн те хыттăн тĕрĕслесе пымала.

Вырăс чĕлхине вĕрентес ĕçе Трак районĕнчи шкулсенче мĕнле йĕркеленине тĕрĕслесе тухнă хыççăн тÿрех çакна калама пулат: ку ĕçре тăшмансем сăтăрланине пĕтерес тĕлĕшпе шкулсем, учителсем, çаплах районри çутĕç пайĕ те, начар ĕçлеççĕ. Кунта çурмамерăсемпе ĕçе татма çук, тăшмансемпе вĕсен йулашкийĕсене тĕпĕ-тымарĕпех пĕтерессишĕн боđшевикла кĕрешмеле.

Хађхи вăхăтра вырăс чĕлхине вĕрентекен преподавателĕн аллинче чи кирлĕ пособисем, справăчниксем, словарсем, таблицăсем тата ыт. те çук. Вырăс чĕлхине вĕрентес ĕçе лайăхлатас пирки пичетре те, учителсен канашлăвĕсенче те темиçе вуншар хут ыйтуларнă.

Вырăс чĕлхи учителĕсем хушшинче те, çаплах вĕренекенсем хушшинче те айалти пусăмра йулса пынине малала тÿсме çук. Хăшпĕр шкулсем (Трак вăтам шкулĕпе Ианкас туллимар вăтам шкулĕ) алайĕнчи нагđаднăй пособисемпе те усă курма пĕлмеççĕ.

Вырăс чĕлхи Совет Сойузĕнчи халăхсемшĕн пурнишĕн те хаклă. Халăха çутта кăларас ĕçре вырăс чĕлхине тивĕçлĕ вырăнă хурса, ăна çавăрса илессишĕн çине тăрса ĕçлемеле.

Вырăс чĕлхи преподавателĕсене хатĕрлес йенĕпе питех те нумай ĕç тумала.

Вырăс чĕлхине вĕрентмели программăсем пирки те ĕç начар тăрат. „Хађхи вăхăтри вырăс чĕлхи“ курсĕн программисем вăтам шкул программин начарлатнă копийĕсем пулса тăраççĕ. Вырăс чĕлхи историйĕн программине тăвакансем, историлĕ учебниксен конспекчĕсем тăрăх Сталин, Жданăв, Кирăв йулташсем паллă тунă çитменлĕхсене асăрхамасăр иртсе кайнă.

Вырăс чĕлхи строителствинче пысăк вырăн йышăнма тивĕçлĕ толковăй словарсене кăларас ĕç те питĕ вăраха йулса пырат. „Выраccен хађхи вăхăтри литературăлă чĕлхин словарне“ вађди материалсем пухма 1920—21 çулсенчех тытăннă, анчах словар халĕ те тухаймаст-ха.

Вырăс чĕлхине вĕрентес ĕçе мĕнле йĕркеленине учителсен çитес йанвар уйăхĕнче пулакан канашлăвĕсенче тата тепĕр хут тĕплĕн пăхса тухмала, пĕтĕм учителсене вырăс чĕлхине вĕрентес ĕçе лайăх йĕркеленĕ преподавателсен ĕç опычĕсемпе паллаштармала.

Вырăс чĕлхине вĕрентес ĕçĕн ыйтăвĕсем çав канашлусенче тĕп ыйтусем пулса тăмала.

И. Сапожникăв.

Çĕрулмишĕн укçа тÿлемеççĕ

(Редакцине килнĕ çыру)

Епĕр, Куславкка районĕнчи «Маркс çулĕпе» колхоз членĕсем, октабĕр уйăхĕнче обйазателствă тăрăх Тĕрлемес пунктне çĕрулми кайса патăмăр. Çĕрулми панă хыççăн, пирĕ укçине памасăрах:—укçине Куславккари пахча-çимĕç хатĕрлев сойузĕнчен илĕр,—тесе хăлалантарса йачĕç. Епĕр унта темиçе хутчен те укçа кайса ыйтрăмăр, анчах пирĕн колхозран 80 хуçалăх тивĕçлĕ укçана ку вăхăтчен илеймеççĕ. Сойузплодоовощри бухгалтерсем:

—Çĕрулмине ăçта панă, укçине те çавăнта илĕр,—теççĕ. Тĕрлемесе кайсан, Куславккара илме хушаççĕ.

Çапла епĕр унта-кунта кайса вăхăта иртеретпĕр. Анчах ĕçĕн вĕçне тупаймастпăр.

Колхозник И. Жарков.

Партине кĕме рекомендаци пачĕç

ШĂХАСАН. Иккĕмĕш Хурамалти Илйич йачĕпе тăракан колхозри комсомолĕц Хрусталđов йулташ 1936 çулта Хĕрлĕ Çар ретне кайрĕ. Хĕрлĕ Çарта вăл кĕçĕн командир пулнă. Хрусталđов йулташ лайăх вĕрентнипе унăн отделенийĕнчи красноармейĕцсем пурте отличниксем пулаççĕ.

Хасан кÿлли патĕнче Йапони самурайĕсене çапса аркатнă вăхăтра пысăк паттăрлăх кăтартнăшăн Хрусталđов йулташа Ленин орденĕпе наградăланă.

Хрусталđов йулташ тăван йалне таврăнсан ăна пĕтĕм Шăхасан районĕ пысăк хаваслăхпа кĕтсе илчĕ. Районри допризывниксен конференцийĕнче вăл доклад туса пачĕ. Хађ вăл хăйĕн тăван йалĕнче активлă ĕçлет.

Çак кунсенче комсомолăн Шăхасан райкомĕ Хрусталđов йулташ зайавленине пăхса тухса, ăна парти ретне кĕме рекомендаци пачĕ.

Г. Исайĕв.

Тинĕс тарăнăшĕсене çĕнсе илекенсем

Хĕрлĕ йалавлă ЕПРОН вунпилĕк çул тултарнă тĕле

ЕПРОН (экспедиция подводных работ особого назначения) пуçланса кайни чаплă боđшевикăн—Феликс Едмундович Дзержинскин йачĕпе таччăн çыхăнса тăрат. 1923 çулта ОГПУ председателĕ йачĕпе ун патне докладной çыру йанă; вăл çырура Хура тинĕс тĕпĕнчен, Крым вăрçи вăхăтĕнче Балаклайевски бухтине пырса кĕнĕ вырăнта путнă Англин „Принц“ пăрахучĕ çинче пулнă ылттăна кăларма сĕннĕ пулнă.

Шыва путнă пăрахута кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен експедицине тумине Дзержинский йулташ хĕрÿлĕн йышăнса илнĕ.

Ученик-водолазсем „Принц“ пăрахута тимлĕн шыранă, йулашкинчен вĕсем унăн хăйпăнчăкĕсене тупнă. Пăрахут çинче нимĕнле ылттăн та пулман. Анчах та експедицине салатса йаман.

— Йумахри пек ылттăна тупма пултараймарăмăр, чăн-чăн ылттăн тупса кăларатпăр,—тенĕ подводниксем.

ЕПРОН-ăн малашнехи ĕçне Дзержинский йулташ хамăр çĕршыври тинĕссен тĕпне путнă пăрахутсемпе хаклă тăракан механисăмсене шыв айĕнчен кăларас ĕçе хутшăнтарнă.

Интервентсемпе белогвардейĕцсем, Хĕрлĕ Çар хыттăн аркатса тăкса, тинĕссене хăваласа йанăскерсем, кайала тарнă чухне нумай суднăсене стройран кăларнă. Выраccен вăйсăр водолаз техники шыва путарнă флота çĕршывăн çĕнĕ хуçисене кайала таврса пама пултараймаст тесе, вĕсем суднăсене йурийех тарăнрах вырăнсенче путарнă.

Шыва путнă йапаласене çăлса кăларас ĕçпе чĕререн интересленекенсем. Совет Сойузĕн пур кĕтесĕсенчен те пухса ЕПРОН-а пĕрлештернĕскерсем, çине тăрса ĕçлеме пуçланă. Кирлĕ оборудованине Севастопађри порт склачĕсенчи ăпăр-тапăрсем хушшинчен шыраса тупнă. Унпа суднăсене шыв айĕнчен çĕклесе хăпартнă çĕрте пысăк асталăхпа усă курнă. Сăмахран, малтанлăха понтонсем вырăнне йурăхсăра тухнă пловучи докăн секцисемпе усă курнă. Карапсен масарĕнчен пăрахăçа тухнă, капиталđнăй ремонт тумали темиçе суднă илнĕ. Çакăн пек пит вăйсăр техникăпа, квалификацилĕ кадрсем те çителĕклĕ таран пулман, ЕПРОН тинĕс тарăнăшĕсем çине штурма тухнă.

Малтанхи çич-саккăр çул хушшинче експедици шыва путнă çар карапĕсене кăларас тĕлĕшпе правителствăн ответлă заданисене чылай пурнăçа кĕртнĕ. 1918 çулти ийунĕн 18-мĕшĕнче Цемесски бухтинче путарнă Хура тинĕс ескадрине шыв тĕпĕнчен ăнăçлăн кăларнă. Фински заливра епронăвĕцсем Англин шыв айĕнче çÿрекен „Ч-55“ кимĕне кăларнă.

1929 çулта, шыв айĕнчен карапсем кăларас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем тунăшăн, правителствă ЕПРОН-а Ĕçлĕх Хĕрлĕ Йалав орденĕ парса наградăланă. ОГПУ аллинчен Шыв-çул транспăрт Халăх Комиссариатне панă вăхăт тĕлне ЕПРОН-ăн ССРС Йевропăри пайĕнчи пур тинĕсĕсенче те шыва путнă карапсене кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен тата гидротехникăлă партисем пулнă.

Шыва путнă йапаласене çĕклесе хăпартас ĕç çулсеренех ÿссе тата çĕнелсе пынă: ытларах лайăхлатнă çĕнĕ оборудовани туйаннă, ĕçри опыт пуйанланса пынă, çынсем ÿснĕ. 1928 çулта организациленĕ Балаклайĕвскри водолазсем хатĕрлекен шкул пĕтĕм çĕршыва вађди пысăк квалификацилĕ водолаз-специалиссем хатĕрлекен техникăлă вăтам шкул пулса тăнă.

Карапсене шыв айĕнчен çăлса кăларас тĕлĕшпе инженерсем кирек мĕнле чаплă плансем туса хатĕрлесен те, вĕсен вăйлă техникă пур пулсан та, ĕççене пурнăçа кĕртес çĕрте тĕп вырăн водолаз йышăнса тăрат. Ĕç ăнăçлăн пуласси унăн хăйулăхĕпе вăл çине тăрса ĕçленинчен килет. Çавăнпа та ЕПРОН хăйĕн техникăлă хĕçпăшалланăвне кадрсем хатĕрлессинчен пуçланă. Малтанхи çулсенче сахалăн хисепленнĕ водолаз кадрĕсем хăвăрттăн ÿссе пынă. 1930 çултипе танлаштарсан, хађхи вăхăтра водолазсен техникумĕнчен вĕренсе тухнисен хисепĕ пилĕк хут ытла ÿснĕ. Техникум шыв айне анма пултаракан тата унта тем вăхăт хушши тăма пултаракан çынсем çеç хатĕрлемест: водолаз платник, слесăр, бетонщик, подрывник, автогенщик, електросварщик ĕçне те вĕренсе алла илсе пырат, вăл шыв айĕнче кирек мĕнле ĕçе те тума пултарат.

Тарăн тинĕссене парăнтарас задача пурнăçа кĕртсе пырса, ЕПРОН асăлăхпа тĕпчев ĕçне пысăккăн сарса йанă. Унăн резуđтачĕ водолазсен ĕçне çăмăллатнипе водолаз таблицисемпе правилисене улăштарнинче, водолаз оборудованине лайăхлатнинче курăнат. Çакă вăл професçилĕ чирсене пĕтерме тата чи тарăн вырăнсенче ĕçлеме пултармала май туса панă: 1923 çултипе танлаштарсан совет водолазĕсем хађхи вăхăтра виçĕ хут çурă ытла тарăн вырăнсенче ĕçлеççĕ. Çичĕ çул кайала водолаз Разувайĕв йулташ 44 печатни тарăнăшне аннине калама çук пысăк çитĕнÿ тесе шутланă, хађхи вăхăтра унтан та тарăн вырăна анаççĕ. Шыв айне путнă карап корпусĕ айне тоннел чавма ĕлĕк сахалтан та ик-виç ерне кирлĕ пулнă, хађхи вăхăтра ăна пĕр-ик кун хушшинче тăваççĕ.

ЕПРОН шыв айне путнă йапаласене çĕклесе кăларас ĕç вађди хăйĕн техникине тăвас ĕçре те пысăк çитĕнÿсем тунă. Инженер-епронăвĕцсем карапсене çĕклесе кăлармали çăмăл тата йĕвăр йышши понтонсен конструкцийĕсене туса хатĕрленĕ, водолазăн шыв айне анмали хатĕрĕсене чылай лайăхлатнă. Анчах та експедицисене тата аваринчен çăлмали снарйадсене техникăпа хĕçпăшаллантарас задача пурнăça кĕртнĕ тесе шутласси иксĕ-ха.

ЕПРОН-ăн 15 çул хушшинчи практикăлă ĕçне тĕплĕн кăтартса парас тесе, хăшпĕр цифрăсем илсе кăтартатăп.

Çак çулсенче ЕПРОН 171 суднă çăлнă. Çав хисепрен 32-шĕ йут çĕршывсен карапĕсем. Авари тÿсекен карапсене çăлнăшăн вађутă шучĕпе 80 пин фунт стерлинг ытла илнĕ. 8 карапа судовладелецсем пачах пăрахнă, вĕсем совет йалавĕпе пĕр çул кăна мар ишсе çÿреççĕ ĕнтĕ. ЕПРОН Шпицберген патĕнче 78-мĕш параллелре „Малыгина“ çăлнипе, океан çинче çÿрекен „Харькăв“ карапа çăлнипе,—вăл çурмаран татăлса кайнă пулнă,—Охотски тинĕсĕнче „Сталинград“ карапа çăлнипе тĕнчипе паллă вырăн йышăнчĕ.

Тинĕссен, йуханшывсемпе кÿлĕсен тĕпĕнчен 264 карап çĕклесе кăларнă. Вĕсенчен нумайĕшне йусаса çĕнетнĕ, халĕ вĕсем ССРС суту-илÿ флочĕн тата Тинĕс-Çар Флочĕн стройĕнче тăраççĕ. Вĕсем—„Садко“ тата „Каспий“ пăрçĕмренсем, „Советская Армения“ тата „Рабочий“ танкерсем, шыв айĕнчен çÿрекен икĕ кимĕ, трађщик „Мойва“, „Пушкин“ пăрахут тата ыт. те. ЕПРОН туса хатĕрленĕ картă çинче, шыва путнă пысăк карапсен вырăнĕсене паллă туса çавăрнă пăнчăсем çÿлсеренех сайралса пыраççĕ.

Шыва путнă йапаласене çăлса хăварас тĕлĕшпе ĕçленипе пĕрлех ЕПРОН строителствă ĕçне те туса пынă, фарватерсене тасатнă. Водолазсем чылай кĕперсен строителствинче хутшăнса ĕçленĕ. Астрахађ патĕнче вĕсем Атăл урлă икĕ калама çук пысăк дÿккер хывнă, вĕсен кашнин тăршшĕ 1,2 километр.

Епĕр нумай тунă, анчах татах нумай тумала пирĕн. Парти, Сталин йулташ, çитĕнÿсемпе каппаймала мар тесе вĕрентеççĕ, çĕнĕрен çĕнĕ çитĕнÿсем тăвассишĕн кĕрешме вĕрентеççĕ. Пирĕн задачă—епронăвĕцсен пĕтĕм коллективне ĕç тухăçлăхне хăпартма, ĕçе лайăхлатма мобилизацилесе, çĕнĕ çитĕнÿсем тăвасси пулса тăрат.

Шыва путнă йапаласене çăлса кăларас çĕрте ĕçлекен çынсене йăвăрлăхсем тата хăрушлăхсем тĕл пулаççĕ. Совет правителстви епронăвĕцсен геройла ĕçне хакла хурат. ЕПРОН работникĕсене 40 çынна ытла ССРС орденĕсем парса наградăланă. Паллă водолаза Архирейĕв йулташа Ĕçлĕх Хĕрлĕ Йалавĕ тата „Знак почета“ орденсем парса наградăланă. Чи лайăх водолаз-специалиссене Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕ парса наградăланă. Чи аслă наградăпа—Ленин орденĕпе—водолаз-отличник Буленков йулташа та наградăланă, ăна халĕ вĕренме йанă.

Партипе правителствă пысăккăн тăрăшса пăхни епронăвĕцсене çĕнĕ çĕнтерÿсем тума, чи тарăн вырăнсене анса ĕçлеме, шыв тĕпĕнчи мĕнпур пуйанлăхсене тупса кăларма хавхалантарат.

Ф. И. Крылов.
ЕПРОН начађникĕ,
2-мĕш ранґри флагман.

1939 çулхи вăйлă тырпулшăн

Ăмăртакан колхозсенче

Хура Çырмари (Вăрнар р.) «Лантăш» колхоз çитес çулхи вăйлă тырпулшăн тата йышлă выљăх-чĕрлĕхшĕн Йĕпреç районĕнчи «Путиловкă» колхозпа социалисăмла ăмăртăва тухрĕ.

Ăмăртакан икĕ колхозĕнче те çитес çулхи çуракине хатĕрленес ĕç хĕрӳлĕн пырат̆. «Лантăш» колхозри бригадăсем çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем ҫĕре çемçетмели вырăнти йапаласене ытларах пухассишĕн тăрăшаççĕ. Ку вăхăтчен бригадăсенче тăвата пин лав тислĕк, тăвата пин лава йахăн йушкăн, 180 центнĕр кĕл тата кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ хатĕрленĕ. Йалхуçалăх машинĕсене пĕтĕмпех йусаса лартнă. Çавнашкалах вăрлăхсене тасатма тытăннă.

«Путиловкă» колхозра та минераллă удобренисем хатĕрлес йенĕпе аван ĕçлеççĕ.

М. Ионăв.

Çуракине хатĕрленме тытăнман

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе парти Обкомĕ «Чăваш республикĕнчи колхозсенче çирĕп тухăçлă тырпул туса илмелле тăвасси çинчен» постановленийĕ йышăнниранпа чылай вăхăт иртрĕ. Анчах, Ишлей районĕнчи колхозсенче çав постановленине сӳтсе йавса, çитес çулхи вăйлă тырпулшăн кĕрешĕве тивĕçлипе пуçарса йарас ĕç çителĕксĕр пырат̆.

Буденный йачĕпе тăракан колхозра ку вăхăтчченех йалхуçалăх машинĕсене йусама пуçăнман. Ку колхозра трийĕр ахалех ларат̆ пулсан та, вăрлăхсене тасатмаççĕ.

Каманин йачĕпе тăракан колхозăн пăрçа-йăсмăк вăрлăхĕсене суртăн вăрлăхсемпе улăштармала. Райçĕрĕç пайĕ хăш колхозпа улăштармалине пайанхи кунччченех палăртса паман. Çавна пула ĕнтĕ ку ĕç йулса пырат̆.

Мамăш йалсоветне кĕрекен колхозсенче те çуракине хатĕрленес ĕçсем йалăх пыраççĕ.

Ишлей райçĕрĕç пайĕн колхозсенче çитес çуракине хатĕрленес ĕçе пуçарса, колхозсем хушшинчи социалисăмлă ăмăртăва йертсе пырас пулат̆.

Г. Щербаков.

Чăваш республикĕнчи МТС-че тăватăмĕш кварталта трактăрсене йусамали плана мĕнле тултарса пынине кăтартакан

СВОДКĂ

(Декабĕрĕн 21-мĕшне, процентпа)

МТС-сем	Капитальнăй ремонт	Текущăй ремонт
Улатăр	20	—
Елĕк	50	57,1
Патăрйел	55,5	85,7
Вăрнар	50	38,4
Йĕпреç	60	30
Ишлей	—	15,8
Канаш	62,5	50,0
Куславкка	66,6	33,3
Куванкилĕ	109	31,6
Сĕнтĕрвăрри	—	33,3
Пăрачкав	8,3	23,6
Тутаркас	—	31,6
Трак	—	46,1
Вăрмар	50	58,8
Çĕрпӳ	100	31,6
Шупашкар	—	—
Шăмăршă	—	50
Шăхасан	77,7	58,3
Шăнкăртам	—	—
Çĕмĕрле	—	—
Йетĕрне	—	50
Йелчĕк	—	92,5
Тăвай	116,6	—
Республикĕпе	48,4	38,8

АСĂРХАТТАРНИ: Улатăр, Елĕк, Сĕнтĕрвăрри, Пăрачкав, Трак, Шупашкар, Шăмăршă, Шăнкăртам, Çĕмĕрле, Йелчĕк МТС-сем декабĕрĕн 21-мĕшне сводкă тăратман, кив цифрăсене кĕртнĕ.

Коłцовкă колхозникĕсем чĕнсе каланине сӳтсе-йаваççĕ

Вăрнар районĕнчи колхозсенче Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе парти Обкомĕ «Чăваш республикĕнчи колхозсенче çирĕп тухăçлă тырпул туса илмелле тăвасси çинчен» йышăннă постановленине тата Коłцовкăри Сталин йачĕпе тăракан колхоз колхозникĕсем çитес çулхи вăйлă тырпулшăн, йышлă выљăх-чĕрлĕхшĕн социалисăмлă ăмăртăва хутшăнма Чăваш республикĕнчи мĕнпур колхозсене, колхозниксемпе колхозницăсене, агрономсене, зоотехникăпа ветеринари работникĕсене чĕнсе каланине сӳтсе-йавасси анлăн сарăлса пырат̆. Çавна май колхозсем хăйсем çине татăклă обйазательствăсем илеççĕ. Сăмахран, Малтикасри „Пĕрлешӳ" тата Булатăвăри Молăтăв йачĕпе тăракан колхозсем çитес çулта гектартан 110 пăтран кайа мар тĕштырă туса илме сăмах парĕç. Хаљ çак колхозсенче çитес çуракине хатĕрленес ĕç хĕрӳлĕн пырат̆.

Хурăн Сурти Чапайĕв йачĕпе тăракан колхозри бригадăсем 1939 çулта вăтам шутпа кашни гектартан 120 пăт тĕштырă туса илессишĕн социалисăмлă ăмăртăва хутшăнчĕç.

Харитонăв комсомолĕц йертсе пыракан улттăмĕш бригадă уйа тислĕк, торф кăларас ĕçе пуçарса йанă. Ку бригадă икĕ кун хушшинче уйа 200 лав торф кăларчĕ. Тăваттăмĕш бригадă та пĕр кун хушшинче 100 лав торф хатĕрлерĕ. Торф кăларнă çĕрте Алексейĕв, Антонăв, Плеханăв колхозниксем нормăна 2—3 хут ытларах тултарса пыраççĕ.

А. Крислов.

Лайăхрах ĕçлеме тăрăшатпăр

СВЕРДЛОВ ОБЛĂÇĔ. Тавда йалĕнчи Буденный йачĕпе тăракан колхоз (Тавда районĕ) йалхуçалăхĕн 1938 çулхи ĕçĕсене октябĕр уйăхĕнчех вĕçлерĕ. Кăçал пирĕн тырпул тухăçĕ иртнĕ çулхисенчен пĕрре те кайа мар пулчĕ. Кашни гектартан 16,30 центнĕр ыраш, 11,20 центнĕр çурхи тулă, 13,87 центнĕр сĕлĕ, 28,81 центнĕр урпа, 10,84 центнĕр пăрçа, 98,78 центнĕр çĕрулми тухрĕ. Çапла вара, кăçал пирĕн колхозниксем государствă умĕнчи обйазательствăсене парса татнă хыççăн, тата йалхуçалăх артелĕн сталинла уставĕ хушнă пек кирлĕ фондсем тума тырăсем уйăрса хăварнă хыççăн, кашни ĕçкунĕ пуçне ыраш 4 кило, тулă 2 кило, урпа—1 кило, пăрçа — 500 грам илеççĕ. Кусемсĕр пуçне ĕçкунĕсем тăрăх 85-шер пус укçа валеçĕнет.

Пирĕн колхозниксен хастарлăхĕ пысăк. Колхозниксем Сталин йулташăн колхозăн общчествăллă интересĕсемпе колхозниксен хăйсен интересĕсене тĕрĕс çыхăнтарса пыма кирли çинчен кăтартса панисене тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Пирĕн колхозниксем çитес çул кăçалхинчен те вăйлă тырпул туса илес пирки çуракине бољшевикла хатĕрленсе пыраççĕ.

Л. Александрăв.

Учонăйсем чĕннине ответлеççĕ

Чăвашсен йалхуçалăх институтĕнчи профсойуз членĕсен, доцентсен тата ассистентсен пухăвĕ çĕршыври учонăйсем колхозниксене агротехникăн çĕнĕ кăтартăвĕсемпе хеçпăшаллантарма чĕнсе каланине сӳтсе-йаврĕ. Епĕр çĕршыври чи лайăх учонăйсен опычĕпе колхозниксене малта пыракан ăслăлăх çитĕнĕвĕсемпе паллаштарас çĕрте активлăн хутшăнса ĕçлеме пулатпăр. Çавна май районсене тата колхозсене кайса, вăйлă тырпул туса илес, йышлă выљăх-чĕрлĕх йенĕпе ăслăлăх ыйтăвĕсем тăрăх лекцисемпе докладсем туса пама пулатпăр. Колхозниксене малта пыракан ăслăлăх çитĕнĕвĕсемпе паллаштарас ĕç йалхуçалăхĕнчи пур специалиссем те хутшăнсан çеç анăçлăн пулса иртессине шута илсе, епĕр Çĕрĕç Халăх Комиссариатĕнчи специалиссем хушшинче ăслăлăхăн уйрăм ыйтăвĕсем тăрăх лекцисемпе докладсем туса пама пулатпăр.

Пуху, шефа илнĕ „Осоавиахим" колхозра массăлă кадрсем хатĕрлес ĕçре те вăйлăн хутшăнса ĕçлеме пулат̆. Кунта курссене институт работникĕсен вăйĕпе иртереççĕ.

Пуху лекцисемпе докладсем туса иртерисĕр пуçне йалхуçалăх ăслăлăхĕн уйрăм ыйтăвĕсем тăрăх стат̆йасем, йалхуçалăхĕнчи стаханăвĕцсен паха ĕçĕсем çинчен „Красная Чувашия", „Чăваш Коммунĕ" хаçатсем урлă сарлакан çутатса тăма кирлĕ тесе шутлат̆.

Çаксемпе пĕрлех пуху колхозсем ваљљи 1939 çулшăн агротехникă кăтартăвĕсене тунă çĕрте хутшăнса ĕçлеме пулчĕ.

Пуху президиумĕ: профессăр Пељцих.
Доцентсем: Рыжов, Заблуда, Љубимăв.
Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн представителĕ Елкин.

Предприйатисенче тата учрежденисенче ĕç дисциплинине çирĕплетсе, епĕр хамăр тăван çĕршывăн хăватне вăйлататпăр

Рабочисемпе служăщчисен тата профсойуз работникĕсен сĕнĕвĕсем

Производствăри бољшевикла йĕркелĕхшĕн

Сталинградри трактăр савăтĕнче ĕç дисциплинине çирĕплетессишĕн чăнласах кĕрешни çук-ха. Кашни уйăхрах савăтран пиншер çын ĕçе пăрахса тухса каяççĕ Вĕсен вырăнне çĕнĕ рабочисем тăраççĕ. Анчах çапла пулнин сăлтавне хуçалăх, парти тата профсойуз организацийĕсен руководителĕсем çийĕле кăларса палăртмаççĕ, ăна хирĕç кĕрешмеççĕ.

Савăтра—вуникĕ пин стаханăвĕц. Анчах пирĕн прогуљщиксем, кахалсем, летунсем, брак тăвакансем те сахал мар. Моторный цехри енергетик Дмитрийĕв пĕрмайах прогулсем тунине тахçанах пĕлеççĕ. Вăл производства пĕрмайах кайа йулса пынă, пĕтĕм коллективăн ĕçне сийенлесе пынă. Анчах Дмитрайĕва киревсĕр ĕçсем тунăшăн нумай вăхăт нимĕнле те айăпламан. Цех администрацийĕ дезорганизатăр ĕçĕсем çине пӳрне витĕр пăхнă.

— Вăт вăл инженер, пысăк квалификациллĕ работник,—тенĕ цех руководителĕсем.

Декабĕрĕн 7-мĕшпе 8-мĕшĕнче Дмитрийĕв ĕçе тухман. Çакăн пек хăтланнăшăн çиллесе тарăхнă стаханăвĕцсем дезорганизатăр тĕлĕшĕпе татăклă мерăсем йышăнма ыйтнă, вара общественнăç хĕсипе кăна администраци ăна ĕçрен кăларнă.

Сборăчнăй цех слесарĕ Федăрăв конвейăртан ремонт бригадине куçма кăмăл тунă. Ăна унта куçарман. Вара вăл пилĕк кун ĕçе тухман. Мĕнле-ха вара? Прогуљщике Федăрăва ĕçрен кăларса йарас вырăнне ремонт бригадине куçарнă.

Çентабĕр уйăхĕнче савăтра 1.014 прогул тунă, октябĕрте—1.187, нойабĕрте—1.022.

Пирĕн савăтра дезорганизатăрсене хирĕç кĕрешмели питĕ те сарăлнă „мерă" вăл—пĕр цехран тепĕр цеха куçарасси пулса тăнă. Çапла, октябĕр уйăхĕнче пĕр цехран тепĕр цеха 158 çынна куçарнă, нойабĕрте—121 çынна.

Социалисăмлă производствăна дезорганизацилекенсене хирĕç витĕмлĕн кĕрешмешкĕн саккун кăларма кирлĕ, вăл саккунра çаксене палăртса хурас пулат̆:

Пĕтĕм прогуљщиксене, рвачсене, кахалсене савăтсен хватерĕсенчен кĕске вăхăтрах кăларса йарасси; конфликтлă ĕçсене хăвăрт пăхса тухасси, çын хăй ирĕкĕпе туман прогулшăн вăтам ĕçукçинчен пĕчĕкрех тӳлесси; производства дезорганизацилекенсем çине преступлениллĕ-либералла пăхнăшăн цехсен, хапрăксен тата савăтсен администрацийĕсене ответ тыттармала тăвасси.

Аг. Брйанцев.
Сталинградри трактăр савăтĕнчи моторнăй цехăн аслă маçтăрĕ.

Сталинград, декабĕрĕн 20-мĕш.

(ТАСС).

Прогуљщиксене хирĕç начар кĕрешеççĕ

Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссариатĕнче ĕç дисциплинине çирĕплетесси çинчен пĕрмайах калаçаççĕ. Анчах та дисциплинă кирлĕ вырăнта тăмаст̆-ха. Служăщчисем ĕçе кайа йулса килнине йе тата ĕçе килсен те вăхăта усăсăр иртернине час-часах тĕл пулатăн.

Ĕçе килекенсене çырса пыма журнал тунă. Вăл журнал çине тăхăр сехет иртсен ĕçе килсен те тăхăр сехетре килнĕ тесе çырма пулат̆. Местком членĕ Соколов час-часах ĕçе вунă-вунпилĕк минут йулса çӳрет. Журнал çине пăхасstates вăл нихăçан та ĕçе йулса çӳремен пек курăнат̆.

Завхоз Лепешкин час-часах ӳсĕр пырат̆. Вăл чылай ĕçсене тумасăрах хăварчĕ. Унăн айăпĕпе комиссариат çурчĕпе общежитисем хĕллене нимĕн хатĕрленмесĕр кĕнĕ.

Контроłор-ревизор вырăнĕнче ĕçленĕ Иљйинскине прогул тунăшăн тата ĕçсе çӳренĕшĕн август уйăхĕнчех ĕçрен кăларнă. Вăл декабĕрĕн 19-мĕшĕччченех контроłпа ревизи тытăмĕнче çӳрерĕ. Хăйĕнчен килмен сăлтавпа прогул тунă тесе 3 500 тенкĕ укçа шыраса илчĕ.

Хăшпĕр работниксем хватер илес ĕмĕтпе çеç ĕçе кĕреççĕ. Акă машинисткă Минина Финанс Халăх Комиссариачĕн çуртĕнче хватер йышăннă хыççăнах октябĕр уйăхĕнче ĕçлеме пăрахрĕ. Çав вăхăтрах тăрăшса ĕçлекен лайăх работниксен хватер çук. Акă промышлĕннăç йенĕпе инспектăр пулса ĕçлекен Смирновă йулташ хватерсĕр пурăнат̆.

Пирĕн учрежденири служăщчисем час-часах районсене командировкăна кайаççĕ. Командировкă йенĕпе укçа нумай пĕтеретпĕр. Анчах та хăшпĕр чухне командировка кайнин усси пачах та пулмаст̆. Сăмахран, налогсен уйрăмĕнче ĕçлекен Птицын Канашпа Сĕнтĕрвăрри районĕсенче пулнă. Вăл унта пĕр усăлă ĕç те туман, ĕçсе пурăннă. Молоствова командировкăна кайсан нимĕн те туманшăн ĕçрен кăларса йанă.

Çак фактсем ĕç дисциплинине тĕпренех лайăхлатмали çинчен калаççĕ. Ĕç дисциплинине пăсакансене хирĕç вирлĕн кĕрешмеле. Ĕç саккунĕсене тата социаллă страховани саккунĕсене хаљхи пурнăçа тивĕçлĕн улăштарни кирлĕ.

Г. Иванов.
Финанс Халăх Комиссариатĕнчи местком председателĕн заместителĕ.

Производствăна дезорганизацилекенсене государствă средствинчен пĕр пус та памала мар

Мускаври, Ленинградри, Свердловскри, Сталинори, Днепропетровскри тата ытти хуласенчи предприйатисенчи рабочисем, стаханăвĕцсем, профсойуз активĕ ĕç дисциплинине çирĕплетесси çинчен, кахалсене, летунсене, прогуљщиксене—производствăна дезорганизацилекенсене хирĕç кĕрешесси çинчен хăйсен пухăвĕсенче, пичет страницисем çинче анлăн сӳтсе-йаваççĕ.

Нумай выступленисенче рабочисем: хаљхи вăхăтри ĕçлев законодательстви, уйрăмăнах унăн вăхăтлăха ĕçе йурăхсăр пулса тăнă май пособисем парасси çинчен калакан пайĕ, хаљ ĕнтĕ кăштах кивелнĕ, тесе кăтартса параççĕ.

— Хаљхи вăхăтри саккун, — тесе çырат̆ „Правда" хаçатра Мускаври Авиахим йачĕпе тăракан савăтри социаллă страховани комитечĕн работникĕ Спиридонăв йулташ,—чирленĕ çынăн производствăри стажне шута илмест. Савăтра вуншар çул хушши ĕçленĕ стаханăвĕц та, савăтра темиçе уйăх çеç ĕçлекен çын та пособи пĕр пекех илеççĕ.

Спиридонăв йулташпа ытти йулташсен шухăшĕпе, вăхăтлăха ĕçе йурăхсăр пулса тăнă май пособи панă чух, предприйатире нумай çул хушши ĕçленĕ кадрăвăй рабочисене маларах хумала. „Дукат" хапрăкри бригадир-механик Нестерăв йулташ хăй цехĕнчи рабочисен йачĕпе çакăн пек сĕнӳ парат̆: вăхăтлăха ĕçе йурăхсăр пулса тăнă пирки пособине ĕç стажне кура парас пулат̆, тет.

— Çакăн пек правилă тума пулат̆,—тесе çырат̆ Нестерăв йулташ,—кадрăвăй рабочисем кăна бӳлетен тăрăх тулли тӳлев илмеле пултăр, ĕç стажĕ 6 уйăхран сахалрах пулнă тĕлсенче пособи пачах памала мар тăвас пулат̆. 2 çула çити ĕçлекенсене ĕçукçин çуррине памала тăвас пулат̆, 3 çул ытла ĕçлекеннисене—80 процент т. ыт. те.

Свердловскра Уралри Серго Орджоникидзе йачĕпе тăракан машиностроительнăй савăтри рабочисен конференцийĕ пулса иртнĕ. Конференци ĕçĕсене рабочисем, стаханăвĕцсем, служăщчисем тата инженерлă-техникллă работниксем пурĕ 1.000 çын хутшăнса ĕçленĕ.

Тухса калакансем пурте: савăтра прогуљщиксене, летунсене тата брак тăвакансене хирĕç тивĕçлипе кĕрешни çук, тесе кăтартса панă. Октябĕр уйăхĕнче 801 прогул пулнă, декабĕрте—1.140.

Хăйĕн решенийĕнче конференци правителствăран ĕçлев законодательствине, çавăн пекех тата социаллă обеспечени тĕлĕшĕнчи законодательствăна та улăштарма ыйтаççĕ.

Прогуљщиксене, летунсене тата брак тăвакансене хирĕç татăклăн кĕрешесси, государствă средствине производствă дезорганизатăрĕсенчен сыхлăсси,—çакăн пек ĕнтĕ конференцире пулнисен пĕр кăмăллă требованийĕ.

(ТАСС).

Профсойуз организацисенче çирĕп дисциплинă пулмала

Профсойузсен çуртĕнче (Шупашкар) 17 сойузăн обкомĕсем вырнаçнă. Вĕсенче 70 çынна йахăн ĕçлет. Вĕсен кашнин хăйĕн обйазаннăçĕ пур. Уйрăм работниксем хăйсен ĕçне лайăххăн туса пымашкăн кунта аппаратри ĕçе çӳреклетни кăна мар, профсойуз членĕсен пĕтĕм анлă масси интересне тивет. Çавăнпа кунта ĕç дисциплинине çирĕплетесси çине питех те вирлĕн пăхни кирлĕ.

Анчах та хăшпĕр сойуз обкомĕсен аппарачĕсенче ĕç дисциплинине пăснисем сахал мар пулаççĕ. Йавăç каскалакан промышлĕннăçри рабочисен сойузĕн облăçри комитет председателĕ Йелахăв йулташ аппаратра çирĕп дисциплинă туман. Унта машинисткă Богданăвă йалан тенĕ пекех ĕçе кайа йулса çӳрет. Наука учрежденисенчи работниксен сойузĕн обкомĕн пӳлĕмĕсем часчасах питĕрĕнсе тăраççĕ. Вырăнсенчен килнĕ профсойуз членĕсем ахалех кайала таврăнса кайнисем те сахал мар пулнă.

Ĕç дисциплинине пăсакансемпе кĕрешнĕ çĕрте профсойуз организацисем паллă вырăн йышăнмала. Вĕсен малта пыракан рабочисене—стаханăвĕцсемпе ударниксене, пĕтĕм коллектива социалисăмлă çирĕп ĕç дисциплинишĕн, летунсемпе прогуљщиксене хирĕç хайарран кĕрешме организацилемеле. Апла тума чи малтанах профсойуз организацисенче дисциплинăна çирĕплетни, профсойуз работникĕсем хăйсем примерлă пулни кирлĕ.

Иакăвлĕв.

Прогуљщиксене ачашлама пăрахмала

Пирĕн савăтра тӳрĕ, тăрăшса ĕçлекен рабочи-стаханăвĕцсемпе ударниксем сахал мар. Вĕсем ĕç тухăçлăхне хăпартас, плана хисеп тата пахалăх йенчен те анăçлăн тултарас тĕлĕшпе пример кăтартса пыраççĕ.

Анчах производствăра дезорганизатăрсем — прогуљщиксемпе летунсем те тĕл пулаççĕ. Декабĕр уйăхĕнче кăна савăтра темиçе прогул пулчĕ. Акă Ленин йачĕпе тăракан бригадă членĕ М. Степанăв, Крупскайа йачĕпе тăракан бригадăра ĕçлекен Е. Иванова декабĕрĕн 7-мĕшĕнче пĕр сăлтавсăрах ĕçе тухман. Кăçал нойабĕр уйăхĕнче ĕçе пырса кĕнĕ Парамонăв та пĕр кун прогул турĕ. Пĕтĕмпе çак уйăхра обувной цехра ĕçлекенсенчен 5 çын, раскройнăй цехра—3 çын прогул тунă т. ыт. те.

Паллах, ĕç дисциплинине çирĕплетмесен вĕсем малашне те прогул тума чарăнас çук. Прогуљщиксемпе летунсене ачашламала мар, вăхăт вĕсене хирĕç хайар кĕрешӳ пуçармал!

Пирĕн шутпа çавăн пек кахалсем пирки совет правителствин çирĕп саккун пулмала.

Шупашкарти Водопйанăв йачĕпе тăракан савăтри рабочисем:
И. Михайлăв, И. Матвейĕв, П. Скачковă, И. Федăрăв.

„УÇĂ" ХĂВАРНĂ ЫЙТУ ПИРКИ

(Учителĕ çырăвĕ)

Пĕр-пĕр ыйтăва чĕрре кĕмеле мар пусарса хурас тесен, ĕçре кавсăлнă хăшпĕр пуçлăхсен хăйне майлă меслет пур.

— Пока тăхтас пулат̆, ыйтăва уçă хăварнă, — тет ун пек чух пуçлăх. Решенине тытат̆ те алă çитмен вырăна чиксе хурат̆. Ыйтаканĕ вара, ахаљ те пуçлăх кӳренесрен шикленекенни пулсан, пуçлăхсен кăмăлĕ уçăласса кĕтме пуçлат̆.

Пушă сăмах мар ку. Турхан райĕçтăвкомĕ хăшпĕр çивчĕ ыйтăвах çавăн пек мăкатма хăтланат̆. Турханти вăтам шкулăн ыйтăвĕ, сăмахран, халĕ те татăлма пĕлмест.

Сăмах Турханти вăтам шкулăн çурчĕсене ытти учрежденисене парса, вĕсен харпăрлăхĕ туса хума хăтланни çинчен пырат̆. Ун пек çуртсем тăваттă. План тăрăх, шкул государствă туса панă çĕнĕ çурта куçнă хыççăн, кивĕ шкул çурчĕсенчен инçетрен вĕренме çӳрекен ачасем ваљљи общежити тата учителсем ваљљи хватерсем тума палăртнă. Анчах пуçлăхсен чен ăçтан иртен!

Шкул куçнă-куçман уйăн кивĕ çурчĕсене ытти учрежденисем пырса кĕнĕ те хуçа пулса тăнă, шкул çурчĕсене хăйсен харпăрлăхĕ тесе йевитлеме ĕлкĕрнĕ.

Ан тив, пĕр çурчĕ пирки калаçмăпăр ĕнтĕ — унта йаслă, çитĕнекен ăру, колхозниксемпе служăщчисен ачисем сăвăнаççĕ, ку учреждени шкулпа пĕр тăван тейĕпĕр. Анчах ытти çуртсенче кам хуçа пулса ларнă — çавă тĕлĕнтерет.

Пĕр çуртĕнче — райхаçатăн типографийĕ, тĕрĕссипе райхаçатăн та мар-ха вăл, Чăвашгизăн. Тепĕр çуртне милицисен общежитийĕ туса хунă, тата тепринче вара — парткабинет.

Çавăн пек сапаласа, таткаласа пĕтернĕ шкул çурчĕсене. Çавăн пирки шкулти вĕренӳ ĕçĕ питĕ пысăк йăвăрлăхсем тӳсет. Примерсем илсе кăтартăпăр.

Шкула таврари йалсенчен 150 ача ытла вĕренме çӳреççĕ. Чи инçисем 20 çухрăм таран (Кармалçем), чи çывăххисем 6—7 çухрăмран кайа мар (Упамса, Хураматвар, т. ыт.). Упамсапа Хураматвар ачисем, йалти пуçламĕш шкултан вĕренсе тухнă хыççăн, 5-мĕш класра вĕренме Турхана килеççĕ. 12—13 çулхи ачасен, хватер çук пирки, куллен 6—7 çухрăма килсе çӳреме тивет. Упамсапа Хураматвартан кăна 60 ача ытла вĕренме Турхана çӳреççĕ. Чăн, çуллахи вăхăтра, ăшă çанталăкра çӳреме ӳркенмеççĕ вĕсем, вĕренесшĕн тăрăшаççĕ. Анчах халĕ, хĕле кĕрсен, шартлама сивĕсем пуçлансан, ачасем çӳреми пулчĕç. Декабĕрĕн 16-мĕшĕнче 5-мĕш „В" класра 36 ачаран (пурте Упамсапа Хураматвар ачисем) 9 ача çеç пынă.

— Мĕншĕн хватер тупмаççĕ? — тейĕ вулакан.

— Колхозниксем пуйан, ăнланакан çынсем, ачисемшĕн хватер укçи тӳлеме пултараççĕ. Ытах та апла пулмасан, колхозсем урлă ачасене ирхине лашапа кӳрсе хăвармала, каçхине килсе илмеле тăвас пулат̆, — тейĕ райĕçтăвком председателĕ.

— Кун пирки шкул сахал мар шухăшланă, вĕренекенсен ашшĕ-амăшĕсемпе те калаçнă, килĕшеççĕ вĕсем, вăй çитнĕ таран хватер укçи тӳлеме те хирĕç мар. Анчах Турхана пырăр-ха.

Кунта хватер тупма хĕн. Турханта учрежденисенче ĕçлекен служăщчисем сахал мар. Хватер хуçисем чи малтан служăщчисене йама хапсăнаççĕ, унтан, вĕренекен 13—14 çулхи ача çине те служăщчи çине пăхнă пек пăхса, уйăхне 30—40 тенкĕ ыйтма та именсе тăмаççĕ. Ачасене колхозсем урлă кашни кун кӳрсе, каçхине килсе илес тесен, Упамса колхозĕн хăйĕн кăна 7—8 лаша тата çавăн чухлĕ çын ĕçрен хăтарса катаччи çеç чуптармала.

Ку ыйтăва халех татас пулат̆, шкул çурчĕсене чăн-чăн хуçине—шкула хăйне памала. Вĕсенче вĕренекенсен общежитийĕ пулмала. Çамрăк ачасене шăнтма никам та нимĕнле ирĕк те паман. Совет̆ăн çамрăк гражданĕсене хăйсен аслă правине — вĕренӳ правине пурнăçа кĕртес ĕç çине бӳрократла пăхни Турхан райĕçтăвкомне чыс кӳмест.

Вĕренекенсемпе вĕсен ашшĕ-амăшĕсем татăклă ответ кĕтеççĕ.

Йакку Арслан.

Англири общчинăсен палатинчи пренисем

ЛОНДАН, декабĕрĕн 20-мĕш. (ТАСС). Чемберлен хыççăн либералсен парламентри фракци лидерĕ Синклер тухса сăмах каланă. Тулашри политикăна йĕртсе пырас ĕçе премьер-министр хăй çине илнĕ вăхăтран вара «мир тата ытларах тĕрексĕр, вăрçă тата ытларах пулмала пулса тăчĕ. Премьер-министр тĕнчери лару-тăру мĕнле пулса пынине ăнланман пулмала, вăл çавăн пекех, хăйĕн ĕçсем тума килсе тухнă икĕ хĕрхенӳсĕр тата хăрушă фашисла диктатăрсен психологине ăнланман»,—тенĕ. Премьер-министра—Англине Италипе пĕрле аван мар ĕç тума хутшăнтарнă тесе айăпласа, Синклер: «Муссолини чейеле хăтланнине пула премьер-министр хăйне, хăй ухмаха тăратса хăварнă»,—тенĕ. «Çавăнпа та Англири общественнăç шухăшĕ Чемберлен Рима кайас пирки сăлтавсăрах пăшăрханмасть».

Совет Союзĕ çинче чарăнса тăрса, Синклер: «ССРС йăлана хăйĕн тĕнчери обйазатĕлствисем тĕлĕшĕнчен тĕрĕс пулнă. Совет Союзĕ чылай государствăсемпе пĕр-пĕрин çине тапăнас, мар пирки договăрсем тунă. Вăл çак пактсенче тухса тăракан обйазатĕлствăсене тӳррĕн тытса тăрать»,—тенĕ. Пĕтĕм тĕнчери мира сыхласа тăрас ĕçре ССРС уйрăмăнах пысăк вырăнта тăнине палла туса, Синклер Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсем халăхи вăхăтра пур майсемпе те Совет Союзĕпе çыхăнса тăрассине ăйлатма тăрăшни паллă факт пулать, тенĕ. Синклер Англи правительствинчен ку ыйтура Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсем пек пулма ыйтнă.

Ллойд-Джордж Англи правительствин тулашри политикине питĕ хытăн критиклеНĕ. «Гитлĕр—Англи, Франци, Совет Союзĕ пĕр блок тума пултарассине пĕлнĕ пулсан,—тенĕ Ллойд-Джордж,—вăл никăçан та Чехословаки çине тапăнмашкăн хăйма пултараймас пулĕччĕ.

Англи премьер-министрĕ генлейнăвĕцсем ыйтнинчен йе ыйтасшăн пулнинчен те ытларах пама килĕшрĕ.

Мӳнхĕнри килĕшĕве илес пулсан, сăй ку тăранччен ăна килĕшӳлĕ тесе шутлакан пĕр çын та тĕл пулман-ха. Премьер-министр Иевропăри çĕршывсенче тăвата хутчен пулчĕ. Итогсем мĕнле? Иевропăри çĕршывсем хушшинчи пăсăлнă килĕшӳсемпе çыхăнусем лайăхланмарĕç. Çакăн хыççăн мир мĕнле пуласси уççăнах курăнса тăракан пулчĕ теме пулать-и? Йевропă тĕлĕнче хăрушă пĕлĕтсем капланса тăраççĕ».

Ун хыççăн лейборис Кокс тухса каланă. Вăл: «Англи, вирĕ агресçивлă державăн блокне пула питĕ пысăк хăрушлăх умне тухса тăчĕ. Мускава, Турцине тата ытти çĕршывсене кайса килни Берлинпа Рима кайса килнинчен темиçе хут ытларах пысăк усă пана пулĕччĕ»,—тенĕ.

Оппозици правительствăна шанас марри çинчен сĕнвĕ резолюцине ытларахĕш 340 сасăпа йышăнман, лейбориссен резолюцийĕшĕн 143 сасă пулнă.

• • •

Декабĕрĕн 21-мĕш. Ĕнер общчинăсен палатинче „национальнăй повиннăç“ тăвас ыйту тăрăх пренисем пулнă. Правительствă йачĕпе тухса каланă ĕç министрĕ Броун палатăна „ирĕклĕ национальнăй повиннăç“ тăвас тĕлĕшпе правительствă ĕçĕсене ырлама сĕннĕ. Çак ĕçсене пурнăçа кĕртнин итогĕсене общчинăсен палатин 1939 çулти март уйăхĕн вĕçĕнче пăхса тухмала, тенĕ вăл.

Лейбориссен оппозицийĕ йачĕпе Артур Гринвуд тухса каланă. Вăл: лейбориссем правительствă сĕнĕвне ырлама пултараймаççĕ, тенĕ. Оппозици хăйне хăй çак ĕçсенчен ирĕклĕ тесе шутлать, вăл вĕсене хирĕç критиклеме пултарать, правительствă тăвакан ĕçсен чăн-чăн йĕнĕ паллă пулаччен хăй çине нимĕнле обйазатĕлствăсем те илмест. Правительствă схемине, ăна сăмахпа кăна мар, ĕçре те чăнниех ирĕклĕн пурнăçа кĕртмеле тунă условипулсан кăна ырлама пулать. Çĕршыв оборонине тĕреклетес тесен, пысăк хуçасемпе капиталиссем тĕлĕшĕнчен хытăрах мерăсем йышăнни кирлĕ, тенĕ вăл.

Правительствă сĕнĕвне ытларахĕш 270 сасăпа йышăннă, ăна хирĕç 9 сасă пулнă. (ТАСС).

Польшăри муниципалитетсен суйлавĕсем

Декабĕрĕн 18-мĕшĕнче Польшăри 67 хулара муниципалитетсен суйлавĕсем пулса иртнĕ, вăл шутра Варшăвăра, Лодзьра, Познаньре т. ыт. хуласенче. Çак суйлавсене пур сулахай тата сылтăм оппозицилĕ партисемпе организацисем те хутшăннă. Вĕсем суйлава хăйсен кандидачĕсен спискисемпе тухнă. Çакăн пек пулнипе суйлавсем оппозицилĕ партисем правительствă лагĕрне хирĕç кĕрешни çеç мар, тата çĕршыври фашисла елементсемпе демократилĕ елементсем пĕр-пĕрипе кĕрешни те пулса тăнă.

Варшавăра, Лодзьра, Кракăвра, Познаньре малтанлăха тунă итогсем çакна кăтартаççĕ: правительствăн „нацилĕ пĕрлешӳ лагĕрĕн“ кандидачĕсем халăх хушшинче, уйрăмăнах, рабочисен кварталесемпе промышлĕннăç центрĕсенче питех те паллă мар тата вĕсен пысăк провал пулнă. Официальнăй сведĕнисем тăрăх, Лодзьра ППС тата класлă профсоюзсем сасăсем ытларах илни йĕнчен малти вырăнта тăраççĕ, вĕсем 35 мандат илнĕ. Правительствăн „нацилĕ пĕрлешӳ лагĕрĕ“ 11 мандат илнĕ. Варшавăра 100 мандатран правительствă лагĕрĕ 39 мандат илнĕ. Правительствăн „нацилĕ пĕрлешӳ лагĕрĕн“ ĕçĕсем Варшавă центрĕнчи районсенче кăна ăнăçлăрах пулнă, рабочисен кварталĕсенче, пĕтĕм сасăсене пекех, демократилĕ организацисен спискисемшĕн панă. Кракăвра класлă профсоюз организацисемпе ППС малти вырăна йышăннă: вĕсем 24 мандат илнĕ, правительствă блокĕ—22 мандат. Уйрăмах правительствă лагĕрĕ Познаньре пысăк поражени тӳсмеле пулнă. Купта ытти партисем 52 мандат илнĕ пулсан, правительствă лагĕрĕ пурĕ те 19 мандат çеç илнĕ. Рабочисем нумайтарахăн пурăнакан ытти хуласенче те ытларахăш сасăсемпе мандатсем класлă профсоюзсемпе ППС ытларах илнĕ, правительствăпа ендек группировкисене иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене тăратса хăварнă.

Суйлавсем çакăн пек пулса иртессе малтанах сиссе, правительствă хаçачĕсем декабĕрĕн 18-мĕшĕнчен суйлав кампани пĕлтерĕшне пĕчĕклетме, сасăлама тухакансен хисепне чакарма тăрăшнă. Вĕсем çак суйлавсене тухакан халăх хисепĕ мĕнле те пулса „парламент суйлавĕ“ вăхăтĕнчи хисепрен иртмеле мар тăвасшăн пулнă. Çак шутпа влаçсем суйлав процедурипе хăйсем вăй çитернĕ таран бӳрократлатса хунă, халăхăн пысăк массине суйлава кăлармала мар тунă. Урнăсем патне кĕме суйлавçăсене темиçешер сехет хушши сивĕ çĕрте черетре тăратнă. Суйлав участкисене пурĕ те вунă сехет хушшинче кăна кĕмеле тунă.

Суйлав кунĕ рабочисем организацисемпе ППС агитмашинĕсене пурне те полици тыта-тыта чарнă, листовкă салатакансене арĕсленĕ.

Чылай хуласенче фашисла çамрăксем рабочисемпе служăщисен демократилĕ организацийĕсем çине тапăннă. Çакăн пек пулнă пулсан та, рабочисем пĕр харăссăн тăрса суйлавра демократла организацисен спискисемшĕн сасăланă.

(ТАСС).

Венгри фашисĕсем Чехословаки чиккине пăсаççĕ

Венгри фашисĕсен террорла ушкăнĕ Чехословаки территорийĕ çинче ирсĕр ĕçсем тума халĕ те чарăнман. Çак кунсенче террориссен банди Славц районĕнче чикĕ урлă каçса кĕнĕ те, Венгри çарĕн регулярнăй чаçĕсем пулăшнипе, 4 йăла тата Словаки территорийĕ çине тухса кайакан чукувçул веткине тытса илнĕ. Террориссем пограничнăй охранăн икĕ жандармне вĕлернĕ тата темиçе çынна амантнă.

Чехословаки çарĕн чаçĕсем пырса çитнĕ хыççăн чукувçулне нальотчиксенчен тасатнă. Хаљ тата çарсем Венгри нальотчиксем йышăннă йалсене тасатса пыраççĕ.

(ТАСС).

Пăлхавçăсен тылĕнче

Йут çĕршывсенчи хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, йулашки икĕ ерне хушшинче Испанин фашиссем тытса илнĕ районĕсенчен Францие çырусем пыми пулнă. Франци чиккинче тупăсемпе пулеметсенчен пенĕ сасăсем илтĕнеççĕ. Фашиссем тытса илнĕ вырăнсенчен пынă çынсем çирĕплетнĕ тăрăх, Оренс провинцинче восстани пуçарса йана пулнă, вăл восстанине пусарса лартма Саламанкăран çарсем илсе пынă.

(ТАСС).

Республикăлă Испанире сăтăрçăсен организацине тупса палăртнă

Республикăлă Испани правительстви тăшманла организаци тупни çинчен пĕлтерӳ пичетлесе кăларнă. Çак тăшманла организаци республикăри халăх вальли кирлĕ йапаласем тăратас ĕçре, уйрăмăнах пысăк хуласенче, чăрмавсем туса хурас тĕллевпе ĕçленĕ. Правительствă пĕлтернĕ тăрăх, çак организацин пур тымарĕсем те правительствă аллинче, айăплисене хĕрхевӳ пулас çук.

Хăйĕн ирсĕр тĕллевĕсенче провокатăрсемпе усă куракан тăшманăн çак çĕнĕ сăтăрла ĕçĕ çинчен асăрхаттарса, правительствă пур граждăнсене те сăтăрçăсене хирĕç кĕрешес ĕçе хутшăнма, республикă тăшманĕсем тĕлĕшпе сыхăлăхла пулма чĕнет.

(ТАСС).

— о —

Республикăлă Испани парламенчĕн председателĕ чĕнсе калани

Еспань агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Испани кортесĕсен (парламенчĕн) председателĕ Мартинес Баррио чылай çĕршывсенчи парламентсен председателĕсем патне çакăн пек телеграммă йанă:

„Пăлхавçăсен службинче тăракан йут çĕршыв авиацийĕ республикăлă Испанин усă хулисем çине тискерле бомбардировкăсем тунă пирки, епĕ Испани парламенчĕ йачĕпе сирĕн парламентран çак етемлĕхе хирĕçле меслетсемпе вăрçă вăрçассине пĕтерсе лартас тĕлĕшпе тивĕçлĕ ĕçсем тума ыйтатăп“.

Çак телеграммăна хирĕç Мартинес Баррио Франци депутатсен палатă председателĕнчен—Ерриоран телеграф тăрăх çакăн пек ответ илнĕ:

„Сирĕн телеграммăна илнĕ хыççăн епĕ Франци правительстви мĕнче тата йут çĕршыв ĕçĕсен комиççийĕ умĕнче тума кирлĕ тивĕçлĕ ĕçсене турăм“.

(ТАСС).

— о —

Германирен хăваласа кăларнă йеврейсен пурнăçĕ тӳсме çук йăвăр

Польшăпа Германи чиккинчи Збоншинăра октябĕрĕн 28-мĕшĕнчен вара 5 пин йеврей беженцисем пурăнаççĕ. Польшă влаçĕсем вĕсене хăйсен патне йышăнмаççĕ, Германи влаçĕсем кайала тавăрăнма ирĕк памаççĕ. „Ньйус кроникл“ хаçатăн Збоншинăри корреспонденчĕ çак беженцăсен пурнăçĕ чăтма çук йăвăрланса çитни çинчен пĕлтерет. 30 градус таран сивĕ çавтаlăк тăрать. Ачасем шăнса вилеççĕ. Беженцăсенчен нумайĕшĕ уçă çĕртрех çĕр каçаççĕ. Пĕр кивĕ витере кăмака тунă. Унта хĕрарăмсемпе ачасем ăшăнма черетпе çӳреççĕ. Чылайĕшĕн хăлхи тумтир пачах çук, мĕншĕн тесен, Германи фашисĕсем йеврейсене хăйсемпе пĕрле килĕнчен нимĕн те илсе тухма хушман. Корреспондент пĕлтернĕ тăрăх, беженцăсем хушшинче пĕр пине йахăн чирлисем.

(ТАСС).

Владимир Коккинакин сăнавлă вĕçевĕ

МУСКАВ, декабĕрĕн 21-мĕш. Паян льотчик-испытатĕл Владимир Коккинаки инженер-орденоносец Ильйушин йулташ конструкцилеНĕ самольот çинче сывлăша 9.500 метр çӳлĕшĕ вĕçсе хăпарнă. Коккинаки йулташ столицă çинче вĕçсе çаврăннă та Звенигородпа Люберец районĕ тĕлĕнче вĕçсе çӳренĕ.

Самольот приборĕсем тата оборудованисем пурте пĕр кăлтăксăр ĕçленĕ. Вĕçев 1 сехет те 20 минут хушши пынă, вăл вĕçев чылай хаклă материалсем панă.

(ТАСС).

Ответлă ĕççене куçарнă

Куславкка комбинатĕнче йулашки вăхăтра ĕçре ӳсвĕ çĕнĕ çынсене ответлă вырăнсене куçарнă. Акă коммерчески директăр пулса ĕçлеме чи лайăх ĕçлекен цех начальникне Йевçейĕв йулташа, биржă пиломатериал цехĕн начальникĕ пулма йăвăç каскалакан цехри сменă маçтăрне Илйин йулташа лартнă.

Ытти участкăри ĕççене те çĕнĕ çынсене куçарнă. Хăма çуракан цехри сменă маçтăрне Гришин йулташа коммуналлă хуçалăх пайĕн начальникне лартнă.

М. Корнилăв.

Шолом-Алейхем çурални 80 çул тултарнă тĕле

Совет Белоруççинчи ĕççынисемпе общественнăç йеврей литератури классикĕ Шолом-Алейхем çурални 80 çул тултарнă кунва хатĕрленет.

Декабĕрĕн 18-мĕшĕнче Минскри йеврейсен Перец йачĕпе тăракан библиотекинче Шолом-Алейхем пултарулăхĕ йачĕпе вечĕр пулса иртнĕ.

Перец йачĕпе тăракан библиотекăра йубилей тĕлне пысăк выставкă уçăлнă.

Кунта Совет влаçĕ пуçланнăран вара Шолом-Алейхемăн йеврей чĕлхипе кăларнă пĕтĕм произведенийĕсене, çавăн пекех вырăс тата белорус чĕлхи çине куçарнă произведенийĕсене пуçтарнă. Ытти материалсем хушшинче А. М. Горький Шолом-Алейхем патне йанă çыру ӳкерчĕкĕ пур. Алексей Макçимăвич „Мальчик Мотл“ кĕнеке çинчен çапла çырать:

„Сирĕн кĕнекене илтĕм, вуласа тухрăм, кулăм та макăртăм—тĕлĕнмеле кĕнеке... Куçарассине мана çапла туйăнать ĕнтĕ,—пĕлсе, авторă йуратса куçарнă. Чăнах та, хăшпĕр вырăнсенче, оригиналри хурланмала та чĕререн тухакан йумăра вырăсла каласа пама йăвăр пек туйăнать. Епĕ калатăп—туйăнать. Кĕнеке мана питех те кăмăла кайрĕ, тата тепĕр хут калатăп—чаплă кĕнеке. Пĕтĕм кĕнекерен халăха чаплăн, ыррăн, ăслăн йуратни хĕлхемленсе тăрать, çакă туйăм вара пирĕн кунсенче питех те сахал. Аллуна хытă чăмăртатăп. Максим Горький. Капри. 1910 çул“.

Шолом-Алейхем çырнă „Тевье молочник“ тата „Менахем Мендл“ произведенисене Белоруççинчи йеврейсен государствă театрĕнче лартса кăтартнисене халăх питĕ йуратса пăхать.

Белоруççири государствă издательстви йубилей тĕлне белоруççи тата йеврей чĕлхипе „Записки коммивояжера“, „Мальчик Мотл“, „Детские рассказы“ т. ыт. произведенисене массăлă тиражпа кăларать.

(ТАСС).

Писатĕл-большевик Николай Островский çуралнă облăçра

КАМЕНЕЦ-ПОДОЛЬСК, декабĕрĕн 21-мĕш. Ыран облăçри ĕççынисем писатĕл-орденоносец Н. А. Островский вилнĕренпе икĕ çул тултарнине паллă тăваççĕ.

Шепетовкăра—Островский çуралнă йалта—сăмахăн çав тери чаплă художникĕн пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен каласусем туса иртереççĕ.

Косорешиевра, Николай Островский йачĕпе тăракан колхозра, писатĕл произведенийĕсене тата унăн революцилĕ ĕçсене кăтартса паракан материалсен выставкине организацилеНĕ.

(ТАСС).

Суту-илӳ ĕçĕнчи çĕнĕ кадрсем

Чăваш АССР Суту-илӳ Халăх Комиссариачĕ çумĕнчи Вĕревӳ комбиначĕ кăçал Шупашкар хулинче кĕске срукла курссем витĕр суту-илӳ ĕçĕнче ĕçлеме 149 çын вĕрентсе кăларнă. Ку шутран, суту-илӳ уйрăмĕсен директăрĕсемпе заместителĕсем 16 çын, продавецсем 80 çын, поварсем 32 çын виçшер уйăхлăх курссенче вĕреннĕ. Столовăйсемпе буфетсен заведуйущийĕсене икĕ уйăхлăх курсран 21 çын вĕрентсе кăларнă.

Продавецсен пĕрер уйăхлăх курсĕсенчен Канашра 18 çын, Çĕмĕрлере 20 çын вĕренсе тухнă.

1939 çулта продавецсем, поварсем, магазинсен пуçлăхĕсем т. ыт. те суту-илӳ ĕçĕнче ĕçлекенсене кĕске срукла курссем витĕр пурĕ 613 çын вĕрентсе кăлармa палăртнă.

Простойсем пулаççĕ

Вăрмарти спортинвентарсем тăвакан хапрăкра ĕç вырăнне тĕрĕс организацилемен. Çавна пула час-часах простой, брак та пулать.

Çакă вăл уйрăмăнах машинăсен цехĕнче палăрать. Ку цехри маçтăр В. Александрăв производствă йĕркине йăпăх пĕлет, çынсене специальнăç тăрăх ĕçлеттермест. Акă, унăн сменинчи рабочи И. Павлăв материалсем çук пирки, тăтăшах ахаль тăрать. Стахановкă М. Çергейăвă йулташ простой пулман чухне йалан нормăран иртерсе ĕçлет. Анчах тепĕр чухне унăн та ахаль тăмала килет.

Простойсене пĕтерес тесе цех начальникĕ Николайĕв йулташ тăрăшмасть.

Таливер.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ, йалти писмоносец комсомолка В. И. Журавльовă.

Ватов фото-ӳкерчĕкĕ (Бюро-клише ТАСС).

Художĕствăлă пултарулăх кружокĕсен смотрĕ

Декабĕрĕн 19—20-мĕшĕнче Шупашкарти Хресчен çуртĕнче Древпромсоюз системине кĕрекен ертелсенчи художĕствăлă пултарулăх кружокĕсен республикăри пĕрремĕш смотрĕ пулса иртрĕ. Вăл смотра 3 хор кружокĕ, 4 хĕлĕхлĕ оркестр, 2 драмкружок тата уйрăм исполнителсем (йурăçсем, музыкантсем, ташăçсем тата декламатăрсем) хутшăнчĕç. Смотр ертел членĕсем хушшинче нумай талантлă çынсем пуррине палăртрĕ.

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Кĕçĕн Маклашкинри ташăпа йурă ансамблĕ хăйĕн пысăк маçтăрлăхне кăтартрĕ. Ансамбль совет композитăрĕсем çырнă йурăсене, халăх ташшисене тата классиксен йуррисене аван йурласа ташласа кăтартрĕ. Сотникăври кустарсен хорĕ те аван йурларĕ. Çавăн пекех Вăрнарти „Труд“, Тутаркас районĕнчи „Дружба“ ертелсенчи шавлă оркестрсем те хăйсен пултарулăхне начар мар кăтартрĕç. Халиччен пулса иртнĕ смотрсене драмкружоксем хутшăнман пулсан, ку смотра драмкружоксем те хутшăнчĕç, вĕсем малти вырăна тухрĕç.

Смотра малти вырăна тухнă кружоксене Древпромсоюз пысăк премисем пачĕ. Пĕрремĕш премие Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Кĕçĕн Маклашкинри йурăпа ташă ансамбль коллективне 2000 тенкĕ, руководителĕне—Тогайĕв йулташа 500 тенкĕ пачĕç. Иккĕмĕш премие (1500 тенкĕ) Сотникăври хор кружокĕ илчĕ, çавăн пекех Çĕмĕрлери, Новинскри (Сĕнтĕрвăрри р.) драмкружоксем те премисем илме тивĕçлĕ пулчĕç. Уйрăм исполнителсенчен: Петров (декламатăр) Иванов (гармонист), Волкăв (кĕслеçĕ), Тимофейĕвă (йурăç) йулташсене палăртса хăвармала. Вĕсем хăйсен искусствине, талантне аван кăтартса парса пысăк премисем илчĕç.

Н. Амурцĕв.

Служăщисен шахмăт турнирĕ

Тутаркас районĕн центрĕнче ĕçлекен служăщисемпе вĕренекенсен шахмăт турнирĕ пулса иртрĕ.

Турнирта 14 çын вылярĕç. Пĕрремĕш вырăна Воронăвапа Виктăрăв йулташсем тухрĕç. Салмин йулташ виççĕмĕш вырăна тухрĕ.

Вĕсемсĕр пуçне 8 çын 5-мĕш категори дипломне илме тивĕç пулчĕç.

Пр. Й.

Шыв арманĕ кирлĕ

Ворнăйра (Сĕнтĕрвăрри р.) ĕлĕк патша саманинче, Çĕрпӳри Курбатăв хуçа 8 чуллă шыв арманĕ тытса, Ворнăй таврашĕнчи халăха кунне 20 пуспа ĕçлеттерсе пуйса пурăннă.

Октябĕр революци хыççăн ку арман Йуртакассинчи ертел аллине куçать. Анчах ертел руководствине армансем тытса пурăннă кулаксемех кĕрсе ларнă май, армана пĕтĕмпех йухăнтарса йараççĕ. Йулашкинчен вара унăн хăшпĕр пурлăхĕсене халăх тăшманĕ Фомин торги туса сутса пĕтерет.

Хальхи вăхăтра Ворнăй таврашĕнчи халăх арман çуккипе питех те аптрать.

Çакна йĕркелесе йарас тесен кивĕ арман вырăнне Мельтресăн çитес вăхăтра çĕнĕрен арман лартасси çинчен тĕплĕн шухăшламала. Çакăнтах тата шыв вăйĕпе ĕçлекен пысăк електростанци те тума май килет.

Ворнăйра пысăк шыв арманĕпе електростанци лартсан ун таврашĕнчи улăха та шăварма май килет.

П. Комиссарăв.

Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ тăрăх 1938 çулти декабĕрĕн 21-мĕшĕнче кăларнă 2033-мĕш №-лĕ

ПРИКАЗ

„Чăваш Коммунĕ“ хаçатăн декабĕрĕн 15-мĕшпе 20-мĕшĕнче пичетленсе тухнă пĕлтерĕве—выльăх тирне хатĕрлев организацисене пани çинчен квитанци кăтартмасан касăй çине клеймо пусма чаракан, Ветеринари управленин начальникĕ Йенисейĕв йулташ панă пĕлтерĕве, вăл саккуна хирĕç пырать тесе, пăрахăçа кăларас тата Йенисейĕв йулташа малашне çавăн пек пĕлтерӳсем пама йурамании çинчен асăрхаттарас.

Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ С. КОРОТКОВ.

Парти вĕрентĕвĕн тĕп çуртĕнче

Пайан, декабĕрĕн 23-мĕшĕнче, парти вĕрентĕвĕн тĕп çурчĕпе ПСÇЛКС хула комитечĕ комсомол активĕ вальли „Диалектический материализм — мировоззрение марксистско-ленинской партии“ темăпа лекци иртереççĕ.

Лекци каçхине 7 сехетре пуçланать.

Парти вĕрентĕвĕн тĕп çурчĕ. ПСÇЛКС хула комитечĕ.

— о —

Ыран, декабĕрĕн 24-мĕшĕнче, парти вĕрентĕвĕн тĕп çурчĕ „Мĕн вăл диалектикăлă материализм“ темăпа лекци туса иртерет. Лектăр—Софрошкин йулташ.

Лекци Хресчен çуртĕнче пулать, кăнтăрла 1 сехетре пуçланать. Билет хакĕ 50 пус.

Билетсене малтанлăха парти вĕрентĕвĕн çуртĕнчи библиотекăра кашни кунах кăнтăрла 1 сехетрен пуçласа каçхине 9 сехетчен илме пулать. Телефон номĕрĕсем 2—72 тата 7—50.

Парти вĕрентĕвĕн тĕп çурчĕ.

Пĕлтерни

Ыран, декабĕрĕн 24-мĕшĕнче, Хресчен çуртĕнче, Вăрçăлă Турăсăрсен Союзĕн хула совечĕ „Христианствă пуçланса кайни“ темăпа тĕне хирĕçле лекци организацилет. Лектăр—Воробйов йулташ. Килхуçи хĕрарăмĕсемпе урам комитечĕсен председателĕсем чĕнӳ билечĕсене СВБ хула советĕнче илме пултараççĕ (адрес: Карл Маркс урамĕ, 13-мĕш №-лĕ çурт).

Лекци каçхине 6 сехетре пуçланать.

СВБ хула совечĕ.

Ответлă редактăр Н. М. ÇЕМЕНАВ.

Пĕлтерни

Пайан, декабĕрĕн 23-мĕшĕнче хула совет çуртĕнче, вырăнсенчи комсодсен Шупашкар хулинчи финанс активĕпе пĕрле канашлу пулать.

КУН ЙĔРКИ:

1. Перекет касси заведуйущийĕн доклачĕ.
2. Вырăнсенчи комсодсен отчочĕсем.

Канашлу каçхине 7 сехетре пуçланать.

Хулари комсод.
Хула совечĕн финанс секцийĕ.

Шупашкарти йăвăç савăтне

КИРЛĔ:

мебĕл тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен маçтăр, стольарни ĕçре икĕ бригадир, плановик, бухгалтĕр, кассир, снабжени тата сбыт начальникĕ.

ХВАТЕР ПАРАÇÇĔ.

1—76 номĕрлĕ телефон тăрăх йе ĕç вăхăтĕнче савăт кантурне пырса тĕплĕн ыйтса пĕлме пулать.

2—1

Шупашкарти йăвăç савăтне

ЛАВСЕМ КИРЛĔ

Мари республикĕнчи Лийшински дачăран (йăвăç савăтĕнчен 25 километрта)

10 пин кубла метр вутă турттармала

тата Йетĕрне вăрман хуçалăхĕн Пошнар участкинчен 2 пин кубла метр йуман болванкисем турттармала (йăвăç савăтĕнчен 65 километрта). Хакĕсем—килĕшӳ тăрăх. Договăрсене йăвăç савăтĕнче тăваççĕ.

Йăвăç савăчĕ.

3—1

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКĔНЧИ „РОСГЛАВХЛЕБ“ ТРЕСТНЕ

йăланлăха ĕçлеме

ИКĔ БУХГАЛТĔР,
ПĔР ЕКОНОМИСТ-СТАТИСТИК,
ИКĔ ОТВЕТЛĂ ИСПОЛНИТĔЛ,
ПĔР МАШИНИСТКА

КИРЛĔ.

Ыйтса пĕлмели адрес: ул. Ленина, „Росглавхлеб“, телефон 2—26.

Кряйроосчичилый Чувашглавлити № 659. Гор. Чебоксары, типография № 1 Мистерства ЧАССР., заказ № 821. Ф. б. 58Х84 в ...